чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

ШĂМАТ КУН
2014, пуш /март/ 29
1

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче “Коммунизм ялавĕ” /халĕ “Хыпар”/ хаçата “ХИСЕП ПАЛЛИ” орденпа наградăланă

38-39 /26444-26445/ №№ Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

*Пресс-конференци*

# Пушар хăрушсăрлăхĕ, çурхи пăтăрмахсем

***Пушар мĕн тери пысăк сиен кӳме пултарни, çавна май хăрушсăрлăх йĕркине яланах пăхăнмалли çинчен тăтăшах калаçатпăр-çыратпăр, çапах вутпа çыхăннă инкек чылай пулать. Кăçалхи нарăс уйăхĕнче вĕсен шучĕ пушшех ӳснĕ, вилнисен йышĕ те пысăкланнă. "Хĕрлĕ автан” ташлама пуçланăшăн айăплисем /ытларах чухне – эрех-сăрапа туслисем/ асăрхаттару сăмахĕсене ăса хывмаççĕ пулĕ çав. Асăннă ушкăнри çынсем тимсĕрлĕх хакла ларнине ăнланччăр тесен тата мĕн тумалла, кăçал çурхи ейӳ тапхăрĕ пирĕн республикăра еплерех иртме пултарĕ – çак тата ытти ыйтăва тишкерчĕç нумаях пулмасть иртнĕ пресс-конференцире.***

Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн пуçлăхĕ Станислав Антонов тата республикăри чрезвычайлă лару-тăрупа граждан оборонин ĕçĕсен патшалăх комитечĕн /ГКЧС/ председателĕ Вениамин Петров паянхи лару-тăрупа паллаштарчĕç. Кăçал кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа нарăс уйăхĕн 26-мĕшĕччен республикăра 163 пушар тухнă /пĕлтĕр çак тапхăрта – 140/, 33 çын /21/ вилнĕ, 19-ăн суранланнă /13/. Яланхи пекех, "хĕрлĕ автан” пурăнмалли секторта ытларах алхасать. Анлă сарăлнă сăлтавсем – электрохатĕрсемпе тата кăмакапа усă курнă чухне хăрушсăрлăх йĕркине пăхăнманни, вутпа асăрханусăр пулни, çав шутрах – ӳсĕрле пирус туртни.

Чи хăрушши – вут-çулăмра çул çитмен ачасен пурнăçĕ татăлни. Пĕлтĕр малтанхи икĕ уйăхра ун пек инкек пулман, кăçал нарăс уйăхĕнче вара 5 ача вутра вилнĕ. Акă Патăрьел районĕнчи Хурама Тăварта икĕ хĕр пĕрчине çăлса хăварайман. Виçĕ тата тăватă çултискерсем вутран хăраса сĕтел айне пытаннă. Шел, кӳршĕ яла ĕçпе кайнă ашшĕпе амăшĕ те, инкек пирки пĕлсенех каялла таврăннăскерсем, кӳрши-арши те çунакан пӳртрен илсе тухайман пĕчĕкскерсене. Нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕнче Канаш районĕнчи Шăхасанта пулнă инкек пирки нумайăшĕ илтнĕ ахăртнех. Йывăç çуртра тухнă пушарта 1989 çулта çуралнă хĕрарăм тата унăн 1-3 çулсенчи виçĕ ачи вилнĕ. Вениамин Петров каланă тăрăх – ку çемье ăнăçсăррисен шутĕнче тăнă, хĕрарăма амăшĕн прависĕр хăварма хатĕрленнĕ. Профилактика органĕсем ачасем мĕнлерех условисенче пурăннине пĕлнĕ. "Картишĕнче нимĕнле выльăх та çук, "фанфурик" савăчĕсем çеç купаланса выртаççĕ", – нумаях пулмасть мĕнлерех ӳкерчĕк курнине аса илчĕ Вениамин Иванович.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев кăçал нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕнче район-хула ертӳçисемпе ирттернĕ видеоканашлура пушар хăрушсăрлăхĕн ыйтăвне сӳтсе явнă. Администрацисен пуçлăхĕсем районсенче пушар хуралĕн ĕçченĕсем халăхпа тĕл пулусем йĕркеленине, килсем тăрăх çӳренине, профилактика информаци материалĕсем валеçсе панине пĕлтернĕ. Михаил Игнатьев ăнăçсăр çемьесемпе ытларах ĕçлемеллине, ку ĕçе вĕсен кӳршисене тата пĕр урамра пурăнакансене явăçтарсан аваннине палăртнă. Çав канашлурах районхула администрацийĕсене ял тăрăхĕсенче килсерен çӳремешкĕн вырăнти администраци тата пушар хуралĕн службин представителĕсенчен, депутатран, полицин участок уполномоченнăйĕнчен тăракан общество комиссийĕ туса хумалла тесе йышăннă. Ку комиссисене кашни хуçалăха кĕрсе çынсем йăлари электрохатĕрсемпе, газ оборудованийĕпе мĕнлерех усă курнине, кăмакасемпе мăрьесен, мунчасен тăрăмне, çурта мĕнпе хутса ăшăтнине тĕрĕслеме хушнă.



Олег МАЛЬЦЕВ сăн ӳкерчĕкĕ

➡ 2 стр.

# «Çамрăксен хаçачĕ» – Интернетра

Хисеплĕ вулакансем! Пуш уйăхĕнчен тытăнса «Хыпар» Издательство çурчĕн сайтĕнче «Çамрăксен хаçачĕн» номерĕсене пĕтĕмпех вулама май килмĕ. Туллин паллашас тесен унăн электрон версине çырăнса илмелле. Пуш-çĕртме уйăхĕсенче **«Çамрăксен хаçачĕн» электрон вариантне электрон почтăпа илсе тăмалли хак – 50 тенкĕ.** Кăларăма тĕрлĕ мелпе çырăнма пулать. Кун пирки тĕплĕнрех – hypar.ru сайтра.

# Пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен – малтанхи хакпа

***Хисеплĕ вулакансем! "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ. Çырăнма васкăр!***

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |

# Пушар хăрушсăрлăхĕ, çурхи пăтăрмахсем

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

«Вут-çулăм алхаснăран вилнисен йышĕнче 13 пенсионер, 2 инвалид, ĕçлекенсем 3 çын, ниçта та вăй хуманнисем – 6. Çакă эпир граждансен хăш-пĕр категорийĕпе ĕçлесе çитерейменнине кăтартать: вĕсене пĕрре асăрхаттарнă та лăпланнă, тăтăшах кайса çӳремелле пулнă та çав... Пушар тухассипе кĕрешнĕ çĕре пĕтĕм халăха явăçтармалла тесе шухăшлатăп», – терĕ ГКЧС председателĕ. Тепĕр самант çинче те чарăнса тăчĕ вăл: специалистсем халăхпа пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркисем пирки инструктаж ирттерсен çынсене ятарлă журнала алă пусма сĕнеççĕ, хăшĕ-пĕри çапла тума килĕшмест иккен. Мĕнрен хăраççĕ-ши? Станислав Антонов тăтăшах ĕçекен çынсемпе сывă пурнăç йĕркине тытса пыракан кӳршисен те ăнлантару калаçăвĕсем ирттермелле терĕ. Паллă ĕнтĕ: хаяррине кăмăллакансем нумай чухне пӳртĕнчех е вырăнĕ çинчех пирус туртаççĕ, хăйсем çывăрса каяççĕ те текех нихăçан та вăранаймасса пултараççĕ. Ӳсĕрскерĕн килĕнче тухнă пушар кӳршĕсен çуртне те кĕл-кăмрăка çавăрас хăрушлăх пысăк. Станислав Юрьевич шкулсенче уçă уроксем ирттернин усси пуррине палăртрĕ: ачасем пушар хуралĕн ĕçченĕсене тăрăшсах итлеççĕ, килĕсене кайсан хăйсене мĕн вĕрентнине ашшĕ-амăшне каласа кăтартаççĕ, аслисене чылай правилăна тепĕр хут аса илтереççĕ.

С.Антонов мунча кăмакисен тăрăмне тĕрĕслесех тăмаллине те аса илтерчĕ. Вăл е ку япала пирки иккĕленӳ çуралсан специалистсене чĕнсе илни вырăнлăрах пулнине каларĕ. Ведомствăсен пуçлăхĕсем çынсене пурлăхне страхламашкăн сĕнчĕç, çакă пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине асăнчĕç. Пушар нимĕн те хăварманнине пурте пĕлеççĕ, страховани компанийĕсем вара инкек тухсан тăкакăн пĕр пайне саплаштарма пулăшĕç.

Пресс-конференцире çанталăк çуркунне енне сулăнсан пулакан инкексем пирки те сăмах пуçарчĕç. Пăр çӳхелсех пынине, çавна май пулăсен асăрханулăрах пулмаллине аса илтерчĕç. Çăлавçăсем шыв-шур объекчĕсенче тăтăшах профилактика рейчĕсем ирттереççĕ. Юлашки çулсенче Чăваш Енре çынсем автомобильпех пăр айне анса кайнă тĕслĕхсем пулкаларĕç. Кăçал ун пек синкер пулман. Шел, Çĕмĕрле районĕнче пурăнакансем Чул хула облаçĕнчи Хмелевка çывăхĕнче инкеке лекнĕ, машинипех пăр айне анса кайнă: пĕри çеç çăлăннă, виççĕшĕ вара вилнĕ.

Çурхи тепĕр тема – ейӳ тапхăрĕ. Хăш-пĕр прогноз тăрăх – вăл пĕлтĕрхи шайра иртмелле. Çĕр çур метртан тарăнрах шăнман, юр хулăнăшĕ те вăтам, анчах вăл кăпăшка, çавна май хăвăрт ирĕлет. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çурхи шыв-шур тапхăрне йĕркеллех ирттермешкĕн мĕн-мĕн тумаллине планланă ĕнтĕ. Кăçал Çĕрпӳсем ейӳрен хăрамаççĕ: унта пĕлтĕр хӳтĕлев сооруженийĕсем тума пуçланă, ĕç малалла пырать. Улатăрта пурăнакансен вара вăрăм кунчаллă атă е кимĕ хатĕрлесе хумалла ахăртнех: айлăм вырăнта вырнаçнă çуртсем патне кашни çуркунне тенĕ пекех шыв çитет-çке. Çапах пĕтĕмлетӳсем тума иртерех-ха: пуш уйăхĕнче юр çума та, сивĕсем хуçаланма та пултараççĕ.

**Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

*Тĕплĕнрех*

# Хура çуртран – шуррине

***«Хыпар» хаçатăн иртнĕ номерĕсенчен пĕринче пичетленнĕ «Хура çуртран шурă пӳрте куçасчĕ» статьяра эпир граждансене авари пулма пултаракан кивĕ çуртсенчен куçарас ыйтусене çĕкленĕччĕ. Çавна май ЧР строительство, архитектура тата пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕ Олег МАРКОВ журналистсемпе курнăçнă май пуçарнă калаçу пирки шăпах асăннă тема тăсăмĕ темелле.***

Олег Иванович ЧР Министрсен Кабинечĕн иртнĕ юн кунхи ларăвĕнче нумай хваттерлĕ çуртсене юсамалли, граждансене кивĕ те юхăннă çуртсенчен куçармалли программăсене мĕнле пурнăçлани çинчен кĕскен доклад турĕ. Умĕн вара массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсене çак ĕç пĕтĕмлетĕвĕпе паллаштарчĕ.

Министр палăртнă тăрăх – нумай хваттерлĕ çуртсене юсассине федерацин «ЖКХна реформăлама пулăшакан фонд çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн тунă йышăнăва тĕпе хурса пурнăçланă. Укçа-тенкĕ – «ЖКХна реформăлама пулăшакан фонд» патшалăх корпорацийĕн, республика бюджечĕн, вырăнсенчи бюджетсен тата граждансен хăйсен шучĕпе. Программăна пĕтĕмпе 22 муниципалитет йĕркеленĕвĕ хутшăннă. «Эпир нумай хваттерлĕ 126 çурта юсарăмăр, вĕсенче 19 пин ытла çын пурăнать. Программăна туллин пурнăçланă, çапла вара республика хăйĕн асăннă фонд умĕнчи обязательствисене пурнăçларĕ», – терĕ Олег Иванович.

Анчах ку ĕç вĕçленнине пĕлтермест. Кăçал çурт-йĕрĕн капиталлă юсавĕ çĕнĕ программăпа килĕшӳллĕн пулĕ. Республикăн капиталлă юсав çинчен калакан саккунне йышăннă, Министрсен Кабинечĕн тивĕçлĕ йышăнăвĕсем те пур. Халĕ юсавăн вăрахлăх – çитес 30 çуллăх – программине йĕркелес ĕç пырать. Унта республика территорийĕнчи юсав кирлĕ нумай хваттерлĕ мĕн пур çурт кĕрĕ.

Çĕнĕ программăна илес тĕк – ăна 2013-2017 çулсем валли çирĕплетнĕ. Сăмах 13,5 пин ытла çын пурăнакан нумай хваттерлĕ 859 çурт пирки пырать. Министр асăннă йышши программăпа 12-13-мĕш çулсенче те ĕçленине аса илтерчĕ – «ун чухне те республика хăйĕн обязательствисене туллин пурнăçланă».

Авари пулма пултаракан çуртсенчен граждансене куçармалли программăна Чăваш Енри 26 муниципалитет йĕркеленĕвĕнчен 23-шĕ хутшăнать. Тата 3-шĕ вара? «Патăрьел районĕнче çынсене куçармалли программăна 2013 çулта вĕçленĕ. Çавăн пекех Елчĕк районĕпе Çĕнĕ Шупашкар хули программăна хутшăнмаççĕ – унта кивĕ, юхăнса кайнă çуртйĕр фончĕ çук», – хуравларĕ Строймин ертӳçи.

23 районпа хулара вара паянхи кун тĕлне тивĕçлĕ аукционсем ирттереççĕ – фондăн кирлĕ укçан 30% танлашакан пайне илнĕ. Ăçта ку ĕçе пурнăçлама ĕлкĕрнĕ – укçан ытти 70% те илĕç, вăл республикăна килнĕ ĕнтĕ.

Министр Шупашкарта кăна çивĕчлĕх пурри палăртрĕ, çакă ЖКХна реформăлама пулăшакан фонд çурт-йĕрĕн тăваткал метрĕшĕн 28,4 пин тенкĕ чухлĕ çеç укçа уйăрнипе çыхăннă. Шупашкарта вара паян тăваткал метрăн рынокри вăтам хакĕ 40 пин тенкĕ патнелле. Çавăнпа та министерство ку ыйтупа строительство организацийĕсемпе çине тăрсах ĕçлет. Çакна вĕсемпе РФ Регионсен аталанăвĕн министерстви палăртнă хакпа хваттерсемпе тивĕçтермешкĕн калаçусем ирттереççĕ тесе ăнланмалла-тăр. Кирек мĕнле пулсан та министр «умри тĕллеве пурнăçласса» шанать.

Асăннă ыйту, сăмахран, тĕп хулари Богдан Хмельницкий урамĕнчи микрорайона та, строительство пыракан çĕнĕ ытти территорие те пырса тивет. «Богданка» тенĕрен – унта программăна кивелнĕ нумай хваттерлĕ 59 çурт кĕрет – ыйтăва икĕ çул хушшинче татса памалла. «Ку çул-йĕрпе транспорт инфратытăмне аталантарма та кирлĕ», – ăнлантарчĕ Олег Иванович.

**Николай КОНОВАЛОВ**

*Шухăш*



# Хирĕç тăру çулне пӳлмеллех

Мана, Киев хулине ирĕке кăларма хутшăннă ватă салтака, Украинăран килекен хыпарсем тарăн шухăша яраççĕ, чĕрене ыраттараççĕ. Эпĕ 1943 çулхи чӳк уйăхĕн 6-мĕшĕнче П.Рыбалко ертсе пынă 3-мĕш гварди танк çарĕн полкĕсемпе пĕрле нимĕç фашисчĕсенчен тĕппипех тасатнă Крещатик урамĕпе мăнаçлăн утса иртнĕччĕ. 70 çула хыçа хăварнă хыççăн çак çĕр-шывăн тĕп хулин тĕп урамĕнче автоматсенчен переççĕ, юн юхать, такам хĕтĕртнипе тата хистенипе тапраннă хура вăйсем, украин халăхĕ суйланă Янукович президент тытса пыракан çулйĕре сивлесе, пăлхав çĕкленĕ. Лару-тăру юлашки кунсенче çав тери кăткăсланса çитнине, çĕр-шыв ертӳлĕхĕпе оппозици пĕр чĕлхе тупма пултарайманнипе анăçра вырнаçнă хăш-пĕр облаç кĕпĕрнаттăрĕсем хăйсен полномочийĕсене пурнăçлама пăрахнă.

Манăн шухăшăмпа – Украина парламенчĕ 2004 çулта вăйра пулнă Конституци патне таврăнни – йăнăш утăм: халĕ Аслă Рада хăйне майлă саккунсене пĕрин хыççăн теприне çул парать. Çакă, тем тесессĕн те, хамăрпа кӳршĕллĕ патшалăхри хирĕç тăрусене лăплантарма пулăшмĕ: Юлия Тимошенкăна ирĕке кăларнă хыççăн оппозици çĕнĕ вăй-халпа çĕкленесси куç кĕретех. Чикĕ леш енчи «туссем» 50 миллионлă халăх пăтранăвне пăхса тăнă май еплерех хĕпĕртенине уççăнах палăртма та именмеççĕ. Эпĕ Украинăра мĕн пулса иртнине тĕрĕс хак пама ниепле те пултараймастăп. Пирĕнпе ĕмĕрех туслă çыхăну тытнă кӳршĕсем Раççейĕн витĕмлĕ сăмахне кĕтеççĕ паян. Вĕсем Европăран та, АПШран та хӳтлĕх, çăлăнăç кураймасси паллă.

**Сильвестр КИРГИЗОВ,**
**педагогика ĕçĕпе вăрçă ветеранĕ, Йĕпреç поселокĕн хисеплĕ гражданинĕ.**

# Килĕшӳлĕхе мĕн çиттĕр?..

Мускаври К.А.Тимирязев ячĕллĕ ял хуçалăх академийĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн мана Винница облаçне ячĕç. Шăпа телейлĕ пулчĕ: эпĕ çĕр-шывĕпех чап-сум илнĕ Социализм Ĕçĕн Геройĕ Василий Михайлович Кавун ертсе пыракан хуçалăхра 30 çула яхăн агрономра ĕçлерĕм. Облаçри ял хуçалăх управленине куçарсан мăшăрăмпа Николай Головченкăпа Винница хулинче тĕплентĕмĕр, паян кунчченех çавăнта пурăнатпăр.

В.Кавуна пирĕн республикăра та пĕлме кирлĕ. Хăй вăхăтĕнче вăл Вăрнар районĕнчи Кульцаври Ленин ячĕллĕ колхозпа туслăн ăмăртса ĕçлеме килĕшӳ тунă, С.Коротков ертсе пынă хуçалăхра пĕрре кăна мар пулнă. Икĕ халăх хушшинчи тăванла çыхăнусем Совет Союзĕ арканнă хыççăн та юлни мана питĕ савăнтарать. Анчах та юлашки вăхăтра Украинăри пăтăрмахсем чун-чĕрере пăшăрхану туйăмĕ çуратаççĕ. Кунашкал лару-тăру вăй илесси паян çеç пуçланман. Çĕр-шыв ертӳлĕхне хирĕç тăракансем тахçанах пуçĕсене çĕклеме тытăннă, çакна вара Президент та, парламент та асăрхаман. Халĕ хирĕçле икĕ юхăм пĕр-пĕринпе куçа-куçăн пырса çапăнчĕç, вĕсене уйăрса тăнăç çул çине кăларма пĕрре те çăмăл пулмĕ. Экстремистсене, оппозицире тăракансене курăнман вăйсем нухратпа хавхалантарни пирĕншĕн паллă.

Украинăри социаллă пурнăçпа экономика йывăрлăхра. Ĕçлекен çынсем уйăхĕ-уйăхĕпе хăйсене тивĕçекен шалăва алла илеймеççĕ. Акă хамăн мăнукăм та, тепловоз юсакан депо слесарĕ, пĕлтĕрхи ака уйăхĕнчи ĕç укçине раштав вĕçĕнче тин илме пултарчĕ. Анчах лару-тăру темĕнле килсе тухсассăн та çивĕчленсе çитнĕ ыйтусене, политиксемпе оппозиционерсен хушшинчи хирĕç тăрусене алла хĕç-пăшал тытнипе татса памалла мар ĕнтĕ. Çакнашкал çул-йĕр çине пырса тухни ырри патне илсе пымĕ. Мирлĕ çынсен пурнăçĕн лăпкăлăхне пăсма çарпа вăй тытăмĕн подразделенийĕсене явăçтарни çĕр-шыв шăпишĕн явапла ертӳçĕсене чыс кӳмĕ.

**Н.НИКОЛАЕВА /ГОЛОВЧЕНКО/.**

# Çураçу, йĕрке кирлех

Эпĕ Харьков хулинче çуралнă. Атте, йăмăксемпе тăвансем унта пурăнаççĕ. Вĕсемпе çыхăну тытсах тăратăп. Пĕлтĕр те çывăх çынсем патĕнче хăнара пултăм. 1994 çултанпа – Чăваш Енре. Чăвашсем питех те кăмăллă çынсем. 2 ывăл пирĕн.

Политикăран аякри çын пулсан та тăван çĕр-шыв пурнăçĕпе интересленсех тăратăп. Украинăри хальхи лару-тăру пирки тăвансем урлă та пĕлетĕп, телекуравпа та сăнатăп. Йĕрке, çураçу, килĕшӳ кирлех. Унсăрăн тем курса тăрăпăр. Влаçа пайлассишĕн тытăçса вун-вун çын вилнипе, çĕр-çĕр аманнипе, юн юхнипе килĕшме пултараймастăп.

**Валентина АРТЮХОВА,**
**çĕвĕç.**
Красноармейски районĕ.

*Канашлу*

# Çивĕч ыйтусем татăлĕç

***Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ку эрнере республикăри пилĕк хулана çитсе пĕлтĕрхи социаллă пурнăçпа, экономика аталанăвĕпе тата 2014 çулхи тĕллевсемпе паллашма палăртнă.***

Юн кун Канашра пулчĕ. Малтан «Эмаль» ăслăлăх-производство фирмине çитсе курчĕ. Предприяти инноваци çул-йĕрĕпе вăй илсе хăйĕн продукцине Казахстанпа Беларуç Республикине çитиех ăсатать. Пĕлтĕр 4,2 млн тенкĕлĕх инвестици хывнă, промышленноç валли 1160 тонна паха сăрă туса кăларнă. «Кăçал кăтартăва 10-15% лайăхлататпăр», – терĕ Юрий Никоноров директор.

Унтан Михаил Игнатьев Хĕвел тухăç микрорайонне çул тытрĕ. Кунта пурăнма юрăхсăр çуртсенчи çынсене 2013-2017 çулсенче хăтлă хваттерсемпе тивĕçтермелли программăпа килĕшӳллĕн çурт çĕкленет. ЖКХ тытăмне çĕнетме пулăшакан фондран – 43 млн, республика бюджетĕнчен 24 млн ытла тенкĕ уйăрнă. Çурт кĕркунне пуçламăшĕнче хута каймалла, 189 çын пурăнма куçмалла.

Канаш хула администрацийĕнче канашлу иртрĕ. Ĕçлĕ калаçу йĕркеленинчен Михаил Игнатьев йăлана кĕнĕ йĕркепе тăрăшулăхпа палăрнисене чысларĕ. Андрей Дьячков врач-невролога, Александр Константинов тренер-преподавателе, Екатерина Пичуркина налук инспекторне, ача-пăча пултарулăх çурчĕн педагогне Ольга Светловăна, ача-пăча музыка шкулĕн директорне Лиана Андреевăна, 3-мĕш шкулăн учительне Ирина Захаркинăна ЧР Пуçлăхĕн Тав хучĕпе алла çыхмалли сехет пачĕ. Хула администрацийĕн физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Искандер Мингалеев РФ Спорт министерствин Хисеп хутне тивĕçрĕ.

Хула администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Людмила Иванова Канашăн 2013 çулхи социаллă пурнăçĕпе, экономика аталанăвĕпе паллаштарнă май «Промтрактор-вакун» АХО пĕлтĕр япăх ĕçленине палăртрĕ, кăçал производство унчченхи çулсенчи шая çитес, ĕç тухăçлăхĕ ӳсес тĕллевлĕ терĕ. Йывăр промышленноç уксахланă пулсан та суту-илӳре, общество апатланăвĕнче, тӳлевлĕ пулăшу тытăмĕнче ӳсĕм самаях.

Пĕлтĕр хула бюджетĕ нухрат 2012 çулхинчен 35,4% нумайрах – 690,7 млн тенкĕ – хывнă. Уçă аукционсем ирттерсе çеç 14282,7 пин тенкĕ пуçтарнă. Çĕр налукĕнчен 23,1% ытларах укçа кĕнĕ.

Людмила Петровна ырă тĕслĕх чылай илсе кăтартрĕ, çитменлĕх те самаях иккен. Республика Пуçлăхĕ Канашра пурăнакансен вăтам шалу виçи чылай район-хула кăтартăвĕнчен пысăкраххине çирĕплетрĕ пулин те 29 предприятире ĕç укçи çынна пурăнма кирлинчен те пĕчĕкрех иккен. «Вĕсене ертсе пыракансемпе кашнинпех калаçрăм, мерăсем йышăнма хушрăм», – терĕ Людмила Иванова.

Канаш 2015 çулта 90 çул тултарать. Людмила Петровна ĕç коллективĕсем юбилее чыслăн кĕтсе илме хатĕрленнине, çавна май нумай ыйту татăласса пĕлтерчĕ. Пĕлтĕр çурт-йĕр тăвассипе строительсем плана 102,2% тултарнă. Кăçал та тĕллев пĕчĕк мар. Ишĕлес патнех çитнĕ çуртсенчен 68 çемьене куçармалла, нумай ачаллă пĕр кил-йыша, 11 тăлăх ачана хăтлă хваттерсем памалла...

Хулара шкул ӳсĕмне çитменнисен 15 учрежденийĕ ĕçлет. 2013 çулта 292 ача валли çĕнĕ сад хута кайнă.

– Кĕçĕн çулхисем валли учреждени çурчĕсем тата 3 кирлĕ. Вĕсене хула варринче, Хĕвел тухăç микрорайонта тата вакунсем юсакан завод çывăхĕнче тума палăртнă, – терĕ Людмила Иванова.

Канашра 3 çултисен ыйтăвне татса панине, 2015 çулта çак ӳсĕмрен кĕçĕннисем те садике çӳреме тытăнасса çирĕплетрĕ Михаил Васильевич.

Пухăннисем республика Пуçлăхне чылай ыйту пачĕç. Шупашкарти биатлон центрĕ, хытă каяшсен полигонĕ, ЖКХ, подъездсен умне автомашинăсем лартни...

Республика тĕп хулинче биатлон центрĕ çĕкленет, анчах вăл çĕр-шыври самаях хăтлисемпе танлашаймĕ. Лайăххине тума 1 млрд тенкĕ таранах кирлĕ. Полигон хула тулашĕнче пулмалла. Вăл ялсенче пурăнакансен кăмăлне те тивĕçтерĕ. Малтанах халăхпа канашламалла, хирĕç ан пулччăр.

Подъездсен умне е çывăхне автомашина лартни илемсĕр çеç мар, газонсене, ача-пăча валли тунă вăйă лапамĕсене çĕмĕрет, çынсене иртсе çӳреме чăрмантарать. Ку ыйтăва администраци, влаç шайĕнче татса памалла.

Доклада сӳтсе явма, ыйтусене хуравлама ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министрĕ Михаил Янковский, строительство, архитектура тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕ Олег Марков, экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Инна Антонова, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Вячеслав Александров хутшăнчĕç.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

*Çын тата саккун*

# Миллионсем тӳлеттересшĕн

***Çынна уголовлă майпа саккуна пăсса явап тыттарнă тăк вăл çакăншăн укçан саплаштармашкăн ыйтма пултарать. Тӳлевĕ – Раççей Федерацийĕн хыснинчен. Ыйтасса ыйтаççĕ-ха та, анчах республикăри судсем чылай чухне укçа тӳлеме хирĕçлекен йышăнусем тăваççĕ. ЧР Прокуратури шăпах çакăн сăлтавĕсене тишкернĕ, прокурорсем пĕлтĕр çак категорири ĕçсене тишкерме хутшăннине пĕтĕмлетнĕ.***

2013 çулта республикăри судсем граждансен хăйсене уголовлă майпа саккунсăр йĕрленĕ тесе сиене Раççей Федерацийĕн хыснинчен саплаштарассипе çыхăннă 80 ыйтăвне пăхса тухнă. Вĕсенчен 62-шне тивĕçтернĕ. Чăн та, туллин мар, 1940 пин тенкĕлĕх компенсаци шыраса илессине çирĕплетнĕ. 5,3 млн ытла тенкĕлĕх 7 ыйтăва тивĕçтермен.

Калăпăр, Шупашкарти Мускав районĕн сучĕ кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен кӳнĕ сиене саплаштарса хыснаран 1 млн тенкĕ тӳлеме ыйтнă гражданина хирĕçленĕ. Тавăç тăратнăскер палăртнă тăрăх – ăна 1986 çулта РСФСР Уголовлă кодексĕн 105 статйипе айăпласа çулталăк та 6 уйăхлăха ирĕклĕхсĕр хăварни саккунсăр пулнă. Çакна вăл унăн приговорне Чăваш АССР Аслă сучĕн президиумĕн йышăнăвĕпе пăрахăçланипе сăлтавланă. Анчах федерацин РФ Граждан кодексĕн иккĕмĕш пайне ĕçе кĕртесси çинчен калакан саккунĕнче пайăррăн палăртнă: кодексăн тивĕçлĕ статйисем 96-мĕш çулччен тата 93-мĕш çултан маларах мар сиен кӳнĕ тĕслĕхсене пырса тивеççĕ. Акă мĕншĕн суд айăпланнăскерĕн ыйтăвне тивĕçтерме сăлтав тупайман.

Прокуратура пĕтĕмлетнĕ тăрăх – 2013 çулта граждансем кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен кӳнĕ сиене саплаштарма ыйтнисем тĕпрен илсен сăлтавлă. Вĕсем ыйтакан тӳлев виçисем ытларах чухне темле пысăк мар – 30 пин тенкĕрен пуçласа. Анчах пысăк виçесем те çук мар – 17 млн тенкĕ таранах. Прокуратура шухăшĕпе – нумай тĕслĕхре çынсем ыйтакан виçе вĕсем кăмăл-сипет тата сывлăх тĕлĕшпе сиен тӳснипе шайлашуллă мар. Çавăнпах судсем вĕсене тӳлемелли виçесене чакарнă.

Калăпăр, тĕп хулари Мускав районĕн сучĕ пĕр гражданин ыйтнипе ăна сиеншĕн 30 пин тенкĕ тӳлеме йышăннă. Хăй 17 млн тенкĕ ыйтнă. Çакна РФ УК 210, 174.1, 222, 167 статйисен тĕрлĕ пайĕпе хăйне саккуна пăсса айăпланипе сăлтавланă. Чăнах та, ЧР Аслă сучĕ ăна тӳрре кăларнă. Анчах маларах палăртнă приговорпа ăна 163 статьян 3-мĕш пайĕн «а» пункчĕпе те айăпланă. Çавна май пĕрремĕш инстанци сучĕ вăл 17 млн тенкĕ ыйтни ăна кӳнĕ сиенпе шайлашса тăмасть текен пĕтĕмлетӳ тунă.

Çапах судсен йышăнăвĕсене тишкернĕ хыççăн республикăри районсемпе хуласен прокурорĕсен ячĕпе тивĕçлĕ çыру янă. Унта граждансем тĕлĕшпе уголовлă ĕçсем пуçарнă, вĕсене тĕпченĕ чухне саккунсене пăхăннине çирĕп сăнаса тăмалли палăртнă, çак ĕçе кирлĕ пек пурнăçласан çынсене кăмăл-сипет, пурлăх тĕлĕшĕнчен кӳнĕ сиене саплаштармалли тĕслĕхсем те сахалрах пулĕç.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

# Çынсем – химиксен хулин тĕп пуянлăхĕ

***Нарăсăн 27-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Çĕнĕ Шупашкарта пулнă.***

Чăваш Ен Пуçлăхĕ хулари перинаталь центрĕн ĕç-хĕлĕпе паллашнă. Кунта регионăн сывлăх сыхлавне çĕнетмелли программи пулăшнипе тĕпрен юсав ĕçĕсем ирттернĕ, пепкесен патологи уйрăмне уçнă, ытти çĕнĕлĕх те пур. Медицина центрĕн тĕп врачĕ Алексей Кизилов палăртнă тăрăх – медиксен профессионализмĕ, çĕнĕ диагностика тата реанимаци оборудованийĕ ача амăшĕсене, тин çуралнисене çӳллĕ шайра медпулăшу кӳме май параççĕ. Çавна май кунта халь хула çыннисем кăна мар, кӳрше регионсенчен те килеççĕ. М.Игнатьев центр сотрудникĕсене тӳрĕ кăмăллă ĕçшĕн тав тунă, çамрăк хулан демографи лару-тăрăвне, пурнăç пахалăхне лайăхлатмалли майсем пысăккине палăртнă.

Республика Пуçлăхĕ «Леспром-2000» компанисен ушкăнĕн производствипе паллашнă. Кунта паха чӳречесем, алăксем, сĕтел-пукан туса кăлараççĕ. Пĕлтĕр компани патшалăх пулăшăвĕпе усă курнă. Производствăна çĕнетме илнĕ кредитсен проценчĕсен пĕр пайне саплаштарма республика бюджетĕнчен 408 пин тенке яхăн парса пулăшнă. Кунта 9,9 млн ытла тенкĕлĕх оборудовани туянса вырнаçтарнă. 2013 çулта «Леспром-2000» потребительсене 63,5 млн тенкĕлĕх продукципе тивĕçтернĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ производство йĕркелĕвне, продукци пахалăхне пысăка хурса хакланă.

«Химик» культура çуртĕнче Михаил Васильевич Çĕнĕ Шупашкарти предприятисен экспозицине пăхса çаврăннă, канашлăва хутшăннă. Унта хулан социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне пĕтĕмлетнĕ, тĕллевсене палăртнă.

Канашлура сăмах илнĕ май М.Игнатьев çакнашкал тĕл пулусем халăхпа тӳрĕ çыхăну йĕркелессине тĕпе хуни çинчен каланă. Çавна май çынсем панă сĕнӳсене шута илсе тĕллевлĕ программăсене тӳрлетӳсем кĕртме пулать.

Хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Сироткин хăйĕн докладĕнче Çĕнĕ Шупашкар аталанăвĕпе паллаштарнă. Пĕлтĕр хула бюджетне 1,3 млрд тенке яхăн тупăш кĕнĕ. Çивĕч ыйтусен шутĕнче – пурăнмалли çурт-йĕр строительствин хăвăртлăхĕ пĕчĕкки, управляющи компанисен ресурссемпе тивĕçтерекен организацисен умĕнчи парăмĕ ӳссе пыни, медицина учрежденийĕсенчи кадрсен дефицичĕ тата ыт.те. Халăх хула влаçĕсене чи малтанах пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсен пахалăхĕ тĕлĕшпе ӳпкелет. Çынсен сăмахне итленĕ хыççăн Чăваш Ен Пуçлăхĕ мэрин вĕсен ыйтăвĕсене татса парассинчен пăрănма юраманни пирки асăрхаттарнă.



cap.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

Хула çыннисен ыйтăвĕсене Сывлăх сыхлавĕн, Строительство, Экономика аталанăвĕн министерствисен ертӳçисем хуравланă. Канашлура палăртнă тăрăх – 2010 çултан тытăнса Çĕнĕ Шупашкара пулăшма федераци тата республика бюджечĕсенчен 2,6 млрд тенкĕ ытла уйăрнă. Çак укçапа ача сачĕсем тума, çамрăк тата нумай ачаллă çемьесене, тăлăхсене хваттерсемпе тивĕçтерме, спорт, ЖКХ объекчĕсене çĕнетме, çулсем тума усă курнă. Хулари кашни тăваттăмĕш çемье ЖКХ пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлеме бюджет субсидине илет.

Калаçăва пĕтĕмлетнĕ май М.Игнатьев хула çыннисем Çĕнĕ Шупашкарăн тĕп пуянлăхĕ пулнине палăртнă, вĕсем тăван хулашăн, унăн хăтлăхĕшĕн тăрăшса пысăк ĕç пурнăçлаççĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ тĕл пулура çĕкленĕ мĕн пур ыйтăва шута илме шантарнă.

Тĕл пулу хулан тава тивĕçлĕ çыннисене патшалăх наградисене панипе вĕçленнĕ. Вĕсене тивĕçнисен шутĕнче – Валерий Благочиннов педагог, муниципалитет службинче нумай çул ĕçлекен Анатолий Кадеев, Маргарита Смирнова повар тата ыттисем. Çавăн пекех Чăваш Ен Пуçлăхĕ пултарулăхри ăнтăлушăн ятарлă стипендие тивĕçнĕ çамрăксене саламланă, нумай ачаллă çемьесене амăшĕн капиталне тата çĕр лаптăкĕ илмеллине ĕнентерекен сертификатсем панă.

■ **К.АВДЕЕВ**

# ЫЙТУ  ХУРАВ

## Уйăх çинчи тĕлĕнтермĕшсем



**? Тĕпчевçĕсем уйăх çинче темиçе хутчен те пулнă. Мĕн курма, ӳкерсе илме пултарнă вĕсем?**

**В.АВТОНОМОВ.**
Комсомольски районĕ.

Совет Союзĕн планетăсен хушшинчи «Уйăх-9» автомат станцийĕ /АМС/ 1966 çулхи нарăсăн 3-мĕшĕнче тĕнчере пуринчен малтан Çĕр спутникĕ çине анса ларнă. Станцийе çичĕ хутчен çыхăннă. Пĕтĕмĕшле вăхăт – сакăр сехете яхăн. АМС ун чухне Тăвăл океанĕ çывăхĕнчи тавралăха ӳкерсе янă.

Уйăх çинче куçакан пысăк яка чулсем хăварнă йĕрсене асăрханă. Пĕрремĕш сăн ӳкерчĕксене 1970 çулсен пуçламăшĕнче тунă. Коллекци çулран çул ӳссе пырать. Çав йĕрсем тĕпчевçĕсене нумай шухăшлаттарçĕ. Хăш-пĕр йĕр вĕçĕнче чул выртать. Тепĕр çĕрте вара çук. Йĕрсене кам е мĕн хăварнă? Траектори те кăсăклă: чулсем çӳлелле çеç мар, аялалла та куçаççĕ. Хăшĕ-пĕри вулкан çăварне кусса кĕнĕ, унтан каялла тухнă. Мĕнле вăй тем пысăкăш чулсене çапла куçаратьха? Ученăйсен шухăшĕпе – çакă вулкан витĕмĕ. Анчах çирĕплетекенни нимĕн те çук. Кунсăр пуçне специалистсем çак йĕрсем хăçан тата мĕн вăхăт хушшинче пулса кайнине те пĕлмеççĕ.

Уйăх çинчи тарăн йĕрсене 200 çул каяллах телескопсем пулăшнипе асăрханă. Тĕлĕнтермĕш çак пулăмăн пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкне 1969 çулта «Аполлон-10» экипажĕ тунă. Хальхи вăхăтра тарăн çак йĕрсен виçĕ тĕсне палăртаççĕ: пĕкĕ евĕрли, кукăр-макăрри тата тӳрри. Тӳррисен тăршшĕ 250 çухрăмах çитет, вĕсем мĕнле пулса кайнине сахал тĕпченĕ. Кукăр-макăр йĕрсене, ăсчахсен шухăшĕпе, авалхи вулкан сирпĕнсен вĕри лава хăварнă.

Китаецсем пĕлтĕрхи раштав уйăхĕнче кĕтменлĕхпе тĕлĕнтернĕ. «Юйту» луноход çинчен янă ӳкерчĕксенче Уйăх тăпри хăмăр тĕслĕ пулни курăнать. НАСА аппарачĕсем вара Уйăха сăрă тĕслĕ кăтартаççĕ. Ку енĕпе ăсчахсен тĕрлĕрен шухăшлаççĕ. Пĕрремĕшсем илсе кăтартакан аргумент: «Аполлон-17» астронавчĕ сăрă Уйăх пейзажĕнче ӳкерĕнни. Скафандр çинче вара тăпра хăмăр тĕслĕ курăнать.

Иккĕмĕшсем Уйăх пичĕ талăкăн тĕрлĕ вăхăтĕнче тĕрлĕ тĕслĕ курăнма, уйрăм лаптăкри тăпрара вăл е ку япала ытларах пулма пултарнине çирĕплетеççĕ. Вĕççĕмĕшсен шухăшĕпе – ӳкерекен аппаратран нумай килет, мĕнле фильтрпа усă курни т.ыт.те витĕм кӳрет. Çавна май хăш-пĕр тĕс çухалма пултарать.

Теприсем тата НАСА хура халăхран чăнлăха пытарнине пĕлтереççĕ. Сăмах май, НАСА сайтĕнче тĕрлĕ тĕслĕ Уйăхăн сăн ӳкерчĕкĕсем пур. Чылайăшне американсем Çĕр спутникĕ çинче пулни иккĕлентерет тата. Çакăн йышши калаçусем вĕчĕрхентерн-ĕрен-ши АПШ хăйĕн çĕнĕ аппарачĕсене «Аполлонсем» анса ларнă вырăнсене яма тăрăшать. 2012 çулхи çулла американсен LRO зончĕ «Аполлон-12» пулнă вырăна ӳкерсе илнĕ. Сăн ӳкерчĕкре астронавтсем хăварнă япаласем, «Сервейер-3» аппарат ванчăкĕсем /икĕ çул маларах хăрушлăхсăр анса ларма май пурине тĕпчеме ăсатнă пулнă/ аван курăнаççĕ.

НАСА нумаях пулмасть татах тĕлĕнтернĕ. Агентство ытти çĕршыв та Уйăха тĕпчени канăçсăрлантарнăран американсен аппарачĕсен ванчăкĕсем выртакан вырăнсем, вĕсем хăварнă йĕрсем патне 75 метр çывăрма чарать.

## Тĕнче шайĕнчи форумра – пĕрремĕш хут

**? Шупашкар "МИПИМ-2014" куравра мĕнпе паллаштарма палăртать?**

**В.АНИСИМОВ.**
Канаш хули.

Чăваш Енĕн тĕп хули пушăн 11-14-мĕшĕсенче Каннăра иртекен инвестици проекчĕсен "МИПИМ-2014" 25-мĕш куравне хутшăнма хатĕрленет. Пирĕн хулан брэнчĕ планета çинчи чи сумлă экономика форумĕнче пĕрремĕш хут янăраса кайĕ.

Сенкер çыран хĕрринчи экспозици çулсерен куçман пурлăх рынокĕн тĕнче шайĕнчи экспер-чĕсене, инвесторсене, девелопорсене, архитекторсене, патшалăх служащийĕсене, финансистсене пухать. Форум опытпа паллашма, ĕçлĕ çыхăнусене анлăлатма, инвестпроектсемпе паллаштарма, контрактсем çирĕплетме май паракан хăйне евĕр лапам пулса тăрать.

Кăçалхи куравра Раççее "хиселпĕ çĕр-шыв" тесе палăртнă. РФ Регионсен аталанăвĕн министерстви ертсе пынипе 1,5 пин тăваткал метр йышăнакан павильонра Раççейĕн пĕрлехи экспозицине пĕрремĕш хут хатĕрлеççĕ. Çĕр-шывăн пĕрлештернĕ ушкăнĕ 25 субъектран тăрать. Чăваш Ен тĕп хули те куравра инвестици хывма май паракан проектсемпе паллаштарма палăртать.

Шупашкар форумăн пĕрремĕш кунĕнчи программăна усать. Хушма инвестицисем тупас тĕллевпе Шупашкар делегацийĕ /ертӳçи – Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ А.Ладыков/ хула инфратăмне аталантаракан мал курăмлă инвестици проекчĕсемпе тата девелоперсен хăш-пĕр ĕçĕпе паллаштарĕ.

Ют çĕр-шыв инвесторĕсене кăтартма палăртнă тĕп проектсен шутĕнче – Атăл леш енчи территорие, Лакрей тата "Шупашкар: 500 çул" парксен аталанăвĕн проекчĕсем, Хĕрлĕ тӳреме, "Çĕнĕ хула", "Сад" микрорайонсене хăтлăлатмалли концепцисем.

## Ӳпре найлани хăлхана кĕмест

**? Çын ватăлса пынă май ӳпре найланине те илтми пулатьим?**

**С.ВАСИЛЬЕВ.**
Çĕрпӳ районĕ.



Ватлăх енне сулăннă май этем пысăк тăтăшлăхлă сасăсене уйăрма пăрахать. Хăлхан анлă сарăлнă çак чирне ăслăлăхра «пресбиакузис» терминпа палăртаççĕ. Çынсем пĕрпĕринпе калаçнă, хутшăннă чухне тухакан чылай сасă – 200-8000 Гц диапазонра. Вăтам çулсенче этем çӳллĕ сасăсене илтми пулать.

Этем организмĕн çак уйрăмлăхĕ юлашки çулсенче шухăшласа кăларнă техника ăслайĕсен никĕсне выртнă. 2006 çулта Британи пресси «Mosguito» хатĕр пирки пĕлтернĕ. Унпа шкулсенче хулигансене хăратма усă кураççĕ иккен. Хатĕр 17 кГц тăтăшлăхри сасса, ӳпре найăлтатăвĕ евĕрлĕскере, кăларать. Аслă ӳсĕмрисем ăна туймаççĕ, анчах ачасемпе çамрăксене çак сасса тӳсме питĕ йывăр. Лавкка хуçисене те çак хатĕрпе сентре тавра явкаланакан шăпăрлансенчен хӳтĕленме сĕннĕ.

Анчах кĕçех «ӳпре» çитĕннисене усă кӳрес вырăнне вĕсене хирĕçле «ĕçлеме» пуçланă. Паллă мар ăста /ахăртнех, вăл хăлха илтменнипе аптăраман/ ӳпре найăлтатăвĕнчен карас телефонĕн шăнкăравĕн кĕвви туса хунă. Çакăн пек телефон ачасен хушшинче анлă сарăлнă. Шкулсенче телефонпа усă курма юрамасть. Апла пулин те ачасем пĕр-пĕрин патне урок вăхăтĕнчех шăнкăраваççĕ. Ара, вĕрентекен ӳпре найăлтатăвне илтмест-çке.

## Çурта сутнă

**? Ёпхӳри чăвашсен вырсарни шкулĕн çуртне сутасси пирки сас-хура тухнăччĕ. Хальхи вăхăтри лару-тăру еплерех?**

**В.ПЕТРОВ.**
Шупашкар районĕ.



Ёпхӳри Пушкин урамĕнче вырнаçнă çурта Нефтекамскри предпринимателе Марат Хафизова 25 çуллăха тара панă. Çурта XIX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче хута янă. Революциччен унта земство управленийĕ, уес училищи вырнаçнă.

Муниципалитет харпăрлăхĕн управленийĕн сайтĕнче çырнă тăрăх – М.Хафизов аукционра çĕнтерсе çак ирĕке илнĕ. Предприниматель лотăн пуçламăш хакне икĕ хута яхăн ӳстернĕ. Мэри XIX ĕмĕрти палăка юсаса çĕнетме 50 млн тенке яхăн кирлине палăртнă. Çапла вара Хафизов господинăн компанийĕсен 28 çулхи тупăш чухлĕ тăкакланма тивĕ.

Мэри истори палăкне 2015 çулхи Пĕтĕм тĕнчери саммит тĕлне бизнес шучĕпе юсаса çĕнетес тĕллевпе сутнă. Кайран предприниматель ăна çăмăллатнă йĕркепе /рентăн çулталăкри хакĕ – 1 тăваткал метршăн 1 тенкĕ/ тара илме пултарать. Аукцион условийĕсемпе 728 тăваткал метр лаптăклă çурта икĕ çулта юсаса йĕркене кĕртмелле. Ĕçе пуçăниччен унăн республикăн Культура министерствипе реставраци проекчĕ пирки килĕшсе татăлмалла тата палăка сыхлама хăй çине яваплăх илнине пĕлтермелле.

Реконструкци хыççăн пĕрремĕш хутри 187,7 тăваткăл метра муниципалитетăн Чăваш вырсарни шкулне /халĕччен вăл пĕтĕм çурта йышăннă/ пама палăртнă. Юлнă 549,3 тăваткал метр çинче арендаторăн офиссем, суту-илӳ вырăнĕсем уçма ирĕк пур. Реставраци ĕçĕсене вăхăтра пурнăçламаншăн ăна çулталăкри аренда укçин 50 проценчĕ чухлĕ штрафлаççĕ. Истори палăкне сыхламаншăн, упраманшăн çăмăллăхлă аренда ирĕкĕсĕр хăвараççĕ.

## Ăнне çухатакан качака

**? Америкăра качакасен ăнсăр пулса ӳкекен тĕсне шухăшласа кăларнине илтрĕм. Мĕн тума кирлĕ ун пекки?**

**А.МАКАРОВА.**
Елчĕк районĕ.

Ăнне çухатакан качака – Америка селекционерĕсен хăйне евĕр çитĕнĕвĕ. Чĕр чуна ыттисенчен уйăракан паллăн вăрттăнлăхĕ – генетика ылмашăвĕнче. Качакан çак тĕсне хăрасан е тĕлĕнсен шалкăм çапать. Чĕр чун çĕр çине йăванса каять, урисене тăсса хурать, выртăн хускалаймасть, анчах тавраран мĕн пулса иртнине курать, туять, ăнланать. 10-15 çеккунтран тăна кĕрет.

Ахаль те сайра шутланнă çак тĕсе 1980 çулсенче чутах пĕтерсе хуман. Кунтан тĕлĕнмелли çук. Качакана какайăшăн усраман, пачах урăх тĕллевпе усă курнă. Сурăх ĕрчетекенсем хурал йытти тытса тăккаланасран кĕтӳре çакăн йышши пĕрер качака çӳретнĕ. Кĕтĕве койотсем тапăнсан сурăхсем тарса пĕтнĕ, мĕскĕн качака вара вырта юлнă. Тискер чĕр чунсем, паллах, унпа кăсăкланса сурăхсем пирки маннă.

## Хăрушă утрав

**? Канада çывăхĕнче пăрахутсене çăтакан утрав пур теççĕ...**

**А.ГЕРАСИМОВ.**
Вăрнар районĕ.

Атлантика тинĕсĕнче Канадăран инçех мар Сейбл утравĕ вырнаçнă. Ăна "Атлантика çăви" тата "пăрахутсене çăтакан" ят панă. 42 çухрăма тăсăлакан утрав, çурла евĕрлĕскер, Гольфстримăн ăшă тата Лабрадорăн сивĕ юхăмĕсем çак вырăнта тĕл пулнипе пулса кайнă. Сейбл кăларса тăратакан чи пысăк хăрушлăх – çăтакан хăйăр. Çак тĕлти ăшăх вырăнсене лексен парăслă кимĕсемпе пăрахутсем çăланса тухаймаççĕ. Пĕтĕмпе 350 ытла инкеке шута илнĕ.

Тепĕр хăрушăлăх – утрав куçни.



Шыв пĕр çыранран хăйăра юхтарнăран, тепĕр енне тултарнăран Сейбл çулталăкра 200 метр хăвăртлăхпа тухăçалла шăвать.

**Кăларăма Валентина БАГАДЕРОВА хатĕрленĕ.**

Хушма кӑларӑм

# Хӳтлӗх



*Патшалӑх программи*

## Тӑлӑхсене – хваттер

***Вӑрнар район администрацийӗн опекӑпа попечительлӗх секторӗн пуҫлӑхӗ Ольга Латифова пӗлтернӗ тӑрӑх – асӑннӑ тытӑмӑн тӗллевӗ тӑлӑхсене тата ашшӗ-амӑшӗн хӳттисӗр юлнисене пурӑнмалли условисене лайӑхлатмашкӑн черете тӑратасси тата хваттерпе тивӗҫтересси шутланать.***

### Хӑйсене ятӑн кӗтесе тивӗҫеҫҫӗ

Йывӑр шӑпаллӑ ҫамрӑксен ыйтӑвне татса парас тӗлӗшпе район ертӳлӗхӗ тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑннӑ. Енӗш ялӗнче, тӗслӗхрен, пӗр ҫамрӑк валли уйрӑм пӳрт лартма тытӑннӑ, Вӑрнар поселокӗнчи Чернышевский урамӗнче кӑҫал нумай хваттерлӗ тепӗр ҫурт строительствине пуҫланӑ.

«Черетре тӑракансен йышӗ иртнӗ ҫул вӗҫӗнче 54 ҫын юлнӑччӗ, кӑҫал 62-ке ҫитрӗ, – тет Ольга Рахмоновна. – Халӗччен пирӗнтен пулӑшу ыйтманнисем килме тытӑнчӗҫ. Вӗсем 18 ҫултан иртнӗ ӗнтӗ, аслӑраххисем те пур. 23 ҫул тултарманнисене черете тӑрататпӑр паллах. Ҫапах та хӑшӗ-пӗрин ыйтӑвне суд йӗркипе татса пама тивет. Чӑн та, тӑлӑхӑн пурӑнмалли вырӑн пур тӑк тата ӑна юрӑхсӑр тесе йышӑнман пулсан хирӗҫлетпӗр».

2012 ҫулта 18 ҫамрӑка хваттер панӑ. 2013 ҫулта – 5 ҫынна. Унсӑр пуҫне Кӗҫӗн Кипек ял тӑрӑхӗнче виҫҫӗн социаллӑ найм килӗшӗвӗпе пурӑнаҫҫӗ.

Паянхи кун тӗлне тӑлӑхсен пысӑк пайӗ поселокра тӗпленӗ: Симӗс /Зеленая/ урамри 7-8-мӗш ҫуртсенче, Нурӑс салинчи Ленин урамӗнчи 50 А ҫуртра виҫӗ хваттер уйӑрнӑ, 21 А ҫуртра – пӗрре...

Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ ҫумӗнче ачасен правине сыхлас енӗпе ӗҫлекен уполномоченнӑй В.Рафинов Вӑрнар хула тӑрӑхӗнче кӑҫалхи нарӑс уйӑхӗн 1-мӗшӗнче пулса тӑлӑхсем валли уйӑрнӑ хваттерсене ҫитсе курнӑ, пурнӑҫ условийӗсемпе паллашнӑ, вӗсем лайӑххине палӑртнӑ.

### «Эпӗ аннерен вун пиллӗкре юлнӑ...»

Вӑрнарта тӑлӑхсемпе ашшӗ-амӑшӗн хӳттисӗр юлнисем валли Симӗс урамра туса лартнӑ 7-мӗш ҫуртра Алиса та хваттер илнӗ.

«Пире кунта питӗ килӗшет, – тет вӑл. – Тӑваттӑн пурӑнатпӑр: мӑшӑрӑм Алексей, хӗрӗмсем Аринӑпа Камила тата эпӗ.»

Хваттерте ҫутӑ та таса. Лаптӑкӗ пысӑках мар пулин те хальхи йышши сӗтел-пукан, йӑлара усӑ куракан техника, ача-пӑча тетти валли те вырӑн тупма пултарнӑ. Сӑмах май, кашни тӑлӑха 36 тӑваткал метрлӑ лаптӑкран кая мар хваттерпе тивӗҫтермешкӗн патшалӑх 841500 тенкӗ уйӑрать. Пурӑнмалли ҫурт-йӗр рынокӗнчи хальхи хакпа танлаштармалли ҫук паллах. Апла пулин те районти строительство организацийӗ ҫак тӗллевпе ӗҫлекен ҫуртсене нихӑш енчен те тиркемелли ҫук. Хваттере хатӗрлесе ҫитереҫҫӗ вӗсем – алӑка уҫса кӗр те пурӑнма пуҫла. Ӑна «тумлантарассишӗн» хуҫин тӑрӑшмалла ӗнтӗ, чун туртӑмне тата енчӗк йывӑрӑшне кура тӗрлӗ хатӗр туянса хӑтлӑх кӗртмелле.



● *Алиса Ведиӑн чи хаклӑ пуянлӑхӗ – Аринӑпа Камила.*

Алиса Ведиӑн тӑван кӗтесӗнче пурте пур темелле: хӑй пӗчӗк ачасемпе ларнине пӑхмасӑр /асли – 2,6 ҫулта, кӗҫӗнни – 1-ре/ ӑна капӑрлатма ӗлкӗрнӗ. Упӑшки ӗҫлемешкӗн республика тулашне каять, тӑванӗсем те пулӑшаҫҫӗ.

Вӑл 15-ре чухне амӑшӗсӗр юлнӑ. Шӑллӗпе иккӗшне Пӑртасра пурӑнакан кукамӑшӗпе мӑн аккӑшӗ пӑхса ӳстернӗ, шкултан вӗрентсе кӑларнӑ. Халӗ кӗҫӗнни училищӗре пӗлӳ илет, вӑл та хваттер черетӗнче тӑрать.

«Аннен аппӑшӗ Валентина Николаевна мана пурӑнмалли кӗтеслӗ тӑвассишӗн тӗрлӗ инстанци тӑрӑх сахал мар чупрӗ. Хӑйӗн ҫемйи пуррине пӑхмасӑр пире хӳтӗлессишӗн ҫунчӗ. Ҫак хваттере вӑл ҫине тӑнипе илме пултарнишӗн ӑна чӗререн тав тӑватӑп», – тет Алиса. Малтанласа унӑн ыйтӑвне тивӗҫтерме килӗшмен иккен, суд вара тӑлӑх майлӑ татса панӑ.

Тӑван ашшӗпе /ӑна хӗрӗпе ывӑлӗ тӗлӗшпе ашшӗ-амӑшӗн прависӗр хӑварнӑ/, аслашшӗ те Вӑрнартах пурӑнаҫҫӗ, ҫывӑх тӗпренчӗкӗсемпе пачах хутшӑнмаҫҫӗ, вӗсен пурнӑҫӗпе интересленмеҫҫӗ.

«Ачасене телейлӗ ҫитӗнтерме ӗмӗтленетпӗр. Амӑшӗн капиталӗн укҫине хушса хваттере пысӑклатма шухӑшлатпӑр», – тет ҫамрӑк хӗрарӑм.

Опекӑпа попечительлӗх секторӗн пуҫлӑхне Алисӑн ӑнтӑлӑвӗ килӗшет. «Ҫемье аталанни, тӗреклӗнсе вӑй илни, мал ӗмӗтпе пурӑнни савӑнтарать, – тет Ольга Рахмоновна. – Вӑл патшалӑх пулӑшӑвне тивӗҫлипе хаклама пӗлни кӑмӑла ҫӗклет. Хӑварах куратӑр вӗт: хваттерте тирпейлӗ, илемлӗ. Хӗр пӗрчисене чунран юратни, вӗсемшӗн тӑрӑшни тӳрех сисӗнет».

### Куккӑшӗ пӑхса ӳстернӗ

Мария Чӑрӑшкас Мӑратра йышлӑ ҫемьере ҫуралнӑ. Ашшӗпе амӑшӗ пӗрин хыҫҫӑн тепри пурнӑҫран уйрӑлнӑ хыҫҫӑн ывӑлхӗрӗн ҫӑмӑлах мар шӑпи татах йывӑрланнӑ. Аслисем ҫитӗннисен шутне кӗрсе пынӑ май ура ҫине тӑнӑ-ха. Кӗҫӗннине Шупашкарсем усрава илнӗ. Марийӑн опекунӗ куккӑшӗ пулса тӑнӑ, унӑн ҫемйинче ҫитӗннӗ вӑл.

Социаллӑ хӳтлӗх пайӗн, опекӑпа попечительлӗх органӗн специалисчӗсем те унӑн кунҫулӗпе интереслennӗ. 18 ҫул тултарнӑ хыҫҫӑн ӑна та ҫак ҫуртра хӑйне ятӑн хваттер панӑ. Халӗ вӑл кунта хӑйӗн ҫемйипе – мӑшӑрӗпе тата пилӗк ҫулти ывӑлӗпе – пурӑнать. Алексей ҫывӑх ҫыннисене тулӑх усрас тесе ӗҫлеме ытти хулана туха каять, Кирилл ача садне ҫӳрет. Мария техникумра технолога вӗренет тата кӗҫех иккӗмӗш хут амӑшӗ пулма хатӗрленет.

«Кунта питӗ килӗшет. Ҫак ырлӑх-пурлӑх пӗтӗмпех хамӑрӑн пулнине ӗненес те килмест. Тунсӑхлама вӑхӑт ҫук. Тантӑшсемпе хутшӑнатпӑр, хунямахунеҫе патне ҫӳретпӗр, вӗсене ҫурхи-ҫуллахи вӑхӑтра дачӑра пулӑшатпӑр», – тет Мария. Вӑл та патшалӑх хӑйне хваттерпе тивӗҫтернӗшӗн чӗререн савӑнать.

■ **Валентина СМИРНОВА.**
Вӑрнар районӗ

*Ыр кӑмӑллӑх*

## Пӗрлехи вӑйпа

***«Ачалӑх ячӗпе, ачалӑхшӑн» марафон пухмачӗ кунсерен пуянланса пырать. Сахал тупӑшлӑ ҫемьесенче ҫитӗнекен пултаруллӑ ҫамрӑксене пурлӑх тӗлӗшӗнчен хавхалантармашкӑн, сусӑр ачасене, тӑлӑхсене тата ашшӗ-амӑшӗн хӳттисӗр юлнисене сиплемешкӗн Чӑваш Енӗн хастарӗсем – граждансем, ӗҫ коллективӗсем, общество организацийӗсем – пӗрлехи вӑйпа нарӑс уйӑхӗн 25-мӗшӗ тӗлне 1005180,32 тенкӗ пухнӑ.***

Ку енӗпе Шупашкарсем /287794 тенкӗ/, Елчӗксем /207190/, Вӑрнарсем /148105/ уйрӑмах пуҫарулӑ пулнине палӑртмалла. Патӑрьелсен /70655/, Йӗпреҫсен /44110/, Хӗрлӗ Чутайсен /41139/, Улатӑрсен /38800/, Канашсен /37680/, Куславккасен /33907/ тӳпи те курӑмлӑ.

Тӑвай тӑрӑхӗнче пурӑнакансем «Ачалӑх ячӗпе, ачалӑхшӑн» марафона ҫуллен хастар хутшӑнаҫҫӗ. Тӗслӗхрен: 2011 ҫулта пухмача пӗрлехи вӑйпа – 116895, 2012 ҫулта 169315 тенкӗлӗх пуянлатнӑ, пӗлтӗр хывнӑ 192078 тенкӗрен 60 пинне район центрӗнчи спорт лапамне оборудованипе пуянлатма, 122878 тенкине йышлӑ, тулли мар тата сахал тупӑшлӑ ҫемьесене ятран пӗр хут пулӑшма, сусӑр ачасен сывлӑхне тӗрӗслеттерме тата сиплеме тӑкакланӑ.

Кӑҫал та сӑваплӑ акцие хӑйсен тӳпине хывакансем йышлансах пыраҫҫӗ: ыр кӑмӑллӑх марафонӗн счетне район администрацийӗ – 10700, вӗрентӳ пайӗ – 3000, Енӗш Нӑрваш шкулӗ – 2600, пушар пайӗ – 2000, пӗрлехи заказчик дирекцийӗ 800 тенкӗлӗх пуянлатнӑ. Ҫакӑ пуҫламӑшӗ кӑна-ха...

Шупашкар хулин Мускав район администрацийӗн ӗҫченӗсем ыр кӑмӑллӑх юхӑмне ҫулленех хапӑлласа йышӑнаҫҫӗ. Нарӑс уйӑхӗн 27-мӗшӗнче вӗсем «Ачалӑх ячӗпе, ачалӑхшӑн» марафон пухмачне 12310 тенкӗ хывреҫ. Сӑмах май, Мускав районӗнче ҫак тӗллевпе 35 пин тенкӗ пухнӑ. Унсӑрӑн мӗнле-ха? Асӑннӑ районта кӑна опекӑпа попечительсен хӳтлӗхне тӑлӑха юлнӑ тата ашшӗ-амӑшӗн хӳттисӗр 269 ача туйса тӑрать. 33-ӗн ют ҫынсен 28 ҫемйинче тӑван кил ӑшшине тупнӑ. Вӗсене те пулӑшу кирлӗ.

«Ачалӑх ячӗпе, ачалӑхшӑн» акцие кашниех хӑйӗн тӳпине хывма пултарать. Ҫапла тумашкӑн «Раҫҫей ача-пӑча фончӗн» регион уйрӑмне /Шупашкар хули, Петров урамӗ, 7-мӗш ҫурт/ пымалла е /8352/ 62-89-42 телефонпа шӑнкӑравламалла.

Марафон шучӗпе укҫана общество организацийӗн счечӗ ҫине куҫарма юрать. Кӑҫал унӑн пухмачне СМС ярса пуянлатма пулать. Ырӑ тума васкӑр. Пирӗн тивӗҫ – хӳтлӗхсӗр ачасен шӑпине ҫӑмӑллатма хутшӑнасси, вӗсене хамӑрӑн тимлӗхе туйса илмешкӗн май туса парасси. Ют ачасем ҫук, вӗсем пурте пирӗн. Апла тӑк эпир вӗсен пуласлӑхӗшӗн яваплӑ.

Хаклӑ вулаканӑмӑрсем, эсир те сӑваплӑ юхӑма пуҫарулӑ хутшӑнасса шанса «Ачалӑх ячӗпе, ачалӑхшӑн» ыр кӑмӑллӑх марафонӗн реквизичӗсене аса илтеретпӗр:

ЧРО ООБФ «Российский детский фонд»
ИНН 2128005408/КПП 213001001
Р/с 40703810075220160067 в Чувашском ОСБ № 8613 г.Чебоксары
БИК 049706609,
кор/с 30101810300000000609.

● ➡ 6, 11, 12 стр.

Хӳтлӗх

# Вӑрҫӑ ачисем хисепе тивӗҫ

***Вӑрҫӑ ачисене патшалӑх пулӑшӑвӗпе тивӗҫтерес тата статусне ҫирӗплетес пирки ҫырнине РФ Патшалӑх Думинчен Шупашкара – ЧР Патшалӑх Канашне тавӑрса панӑ. Чӗрере ҫуралнӑ шанчӑк ҫавна май ерипен сӳнме пуҫларӗ.***

***Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫин ҫулӗсенче ҫут тӗнчене килнисем ку ыйтӑва пӗрре кӑна мар ҫӗкленӗ, малашне те хускатӗҫ паллах.***

Чун ыратӑвӗпе эпӗ ҫырнӑ "Тан марлӑх" статья "Хыпар" хаҫатра 2012 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнче кун ҫути курчӗ. Унта йывӑр ҫав тапхӑрта фронтра ҫапӑҫакансемпе тылра ӗҫлекенсем Ҫӗнтерӗве пӗрле туптани тата ҫамрӑксен йывӑр шӑпи ҫинчен аса илнӗччӗ. Чӑнах та тылра тӑрӑшакансен кулленхи пурнӑҫӗ салтаксенни пекех тертлӗ те инкек-синкеклӗ пулнӑ: тӑхӑнма тумтир, ҫиме апат ҫитмен. Апла пулин те ашшӗсӗр юлнӑ ҫул ҫитмен ҫамрӑксем ҫапӑҫу хирӗнчисене тумлантарма, тӑрантарма тата хӗҫ-пӑшалпа тивӗҫтерсе тӑма ваттисемпе танах хутшӑннӑ. Тыл ҫирӗп пулмасан тӑшмана ҫӗнтерме ҫуккине пурте лайӑх ӑнланнӑ.

Вӗсем ашшӗ-амӑшӗн ӑшшине туйса ӳсмерӗҫ, ҫамрӑклӑх мӗнне пӗлмерӗҫ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче тата ун хыҫҫӑнхи ҫулсенче халӑх хуҫалӑхне уралантарнӑ чухне ырми-канми ӗҫленӗ пулсан та хальхи пенсийӗсем пӗчӗк, "Ӗҫ ветеранӗ" ята хӑшӗ-пӗри тивӗҫеймерӗ, ҫавӑнпа патшалӑх ҫӑмӑллӑхӗсемпе усӑ кураймасть.

Вӑрҫӑ ачисем ҫинчен республика тулашӗнчи хаҫат-журналта та тӑтӑшах сӑмах хускатаҫҫӗ. Анчах ҫав кӑларӑмсене влаҫра ларакансем вуласах каймаҫҫӗ пулас, паянхи куна та тивӗҫлӗ хурав паракан ҫук.

Шухӑшӑма ҫирӗплетес тӗллевпе "Хыпар" хаҫатра 2013 ҫулта пичетленнӗ тӗрлӗ ӳсӗмри авторсен статйисене илсе кӑтартас тетӗп.

"Аттесемпе пиччесем, куккасем вӑрҫӑран таврӑнманни этем шутӗнчен кӑларчӗ. Пире ҫаплах "вӑрҫӑ самани" таптать. Акӑ мӗнле обществӑра пурӑнатпӑр эпир, вӑрҫӑ хирӗнче пуҫ хунисен ачисем", – чун ыратӑвне пӗлтернӗ Красноармейски районӗнчи К.Шачкин /"Пире ҫаплах вӑрҫӑ самани таптать", "Хыпар", 2012 ҫулхи юпа уйӑхӗн 9-мӗшӗ/.

"Вӑрҫӑ ачисем ялта та, хулара та нумаях юлман ахӑр. Вӗсене пулӑшмашкӑн патшалӑхӑмӑр май тупаймасть-шим вара? Ҫакӑ пире кӑна мар, телейлӗ ачалӑхӑмӑра ылханлӑ ахӑр самана туртса илнипе тертлӗ-нушаллӑ пурнӑҫра ҫитӗннӗ ҫӗр-ҫӗр тӑлӑха канӑҫсӑрлантарать", – ҫырнӑ Канаш районӗнчи Н.Денисова /"Эпир – вӑрҫӑ ачисем", "Хыпар", 2012 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗн 27-мӗшӗ/.

"Эпир чӑннипех те нумайӑӑн мар. Вӑрҫӑра ҫапӑҫнӑ упӑшкишӗн хӑшӗ-пӗри хваттер, машина илчӗ. Вӑрҫа кайнӑ каччӑсене палламан та вӗсем, ӑсатса яман, кӗтсе илмен. Фронтран ырӑ-сывӑ таврӑннӑ йӗкӗтсемпе пӗрлешсе ача-пӑча ҫуратнӑ. Халӗ вара салтак арӑмӗ шутланаҫҫӗ, ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ кураҫҫӗ. Питӗ пысӑк тӗрӗс марлӑх ҫакӑ", – пӗлтернӗ Вӑрнар районӗнчи И.Егоров /"Атте ҫупӑрланине ас тумастӑп", "Хыпар", 2012 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗн 30-мӗшӗ/.

"Киле ырӑ-сывӑ таврӑннисем ҫемье ҫавӑрнӑ, ача-пӑча ҫуратса ҫитӗнтернӗ. Вӗсен ачисем телейлӗ. Ҫав салтаксене чыс та мухтав. Вӗсем пире тӑшманран ҫӑлнӑ тетпӗр. Аттесем вӑрҫа выляма кайнӑ-шим? Вӗсене нимӗнле хисеп те, пире нимӗнле хӳтлӗх те ҫук. Никама та кирлӗ мар ҫынсем шутланатпӑр. Пире, вӑрҫӑ ачисене, ҫӑмӑллӑх пулать-ши, ҫапӑҫу хирӗнче выртса юлнӑ аттесем нивушлӗ ниме те тивӗҫ мар-ши?" – ҫырнӑ Муркаш райончи А.Галкина /"Вӑрҫӑ ачисем, пӗрлешӗр", "Хыпар", 2012 ҫулхи юпа уйӑхӗн 6-мӗшӗ/.

"Тӑватӑ ҫула яхӑн тӑсӑлнӑ вӑрҫӑ кӳнӗ суран халӗ те канӑҫ памасть. Пирӗн, ашшӗсене вӑрҫӑ пуҫламӑшӗнчех ҫухатнӑ ҫынсен, хашлатса сывламалли ҫеҫ юлать. Тен, пурӑна-киле ҫӗр-шыв ертӳлӗхӗ вӑрҫӑ ачисене те аса илӗ. Ҫав вӑхӑт ҫитиччен пурӑнасчӗ-ха, чун-чӗрене иленекен шанчӑк хӗлхемне сӳнтерес марччӗ", – палӑртнӑ Йӗпреҫ районӗнчи Л.Никитина /"Шанчӑк хӗлхемне сӳнтерес марччӗ", "Хыпар", 2012 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗн 22-мӗшӗ/.

Кашни ҫырура – чун ыратӑвӗ, тан марлӑха сивлени.

Ҫӗнтерӗве туптама хӑйсен тӳпине хывнӑ кашни ҫын мухтава тивӗҫ – сывӑ юлнисем те, ҫапӑҫу хирӗнче пуҫ хунисем те, тылра ӗҫленисем те. Хальлӗхе Раҫҫейӗн 16 субъекчӗн саккунӗсемпе килӗшӳллӗн вӑрҫӑ ачисем тӗлӗшпе ҫӑмӑллӑх палӑртнӑ. Кашнийӗн – хӑйне май, тӗрлӗрен эппин. Статусӗ енӗпе те пӗр шухӑшлӑх ҫук.

Вӑрҫӑ ачисен шутне 1929 ҫултан пуҫласа 1945 ҫулхи авӑнӑн 4-мӗшӗччен ҫуралнӑ, тӑлӑх ӳснӗ ҫамрӑксене кӗртмелле. Хальхи вӑхӑтра Чӑваш Республикинче тӗпленсе пурӑннине те шута илмелле пуль. Ҫак йыша кӗрекенсен 10-15 проценчӗ ҫут тӗнчерен уйрӑлнӑ, 30-40 проценчӗн ашшӗсем тӗрлӗ сӑлтава пула вӑрҫа кайман е фронтран тӗрӗс-тӗкел таврӑннӑ, 30-35 проценчӗ "Ӗҫ ветеранӗ" ята илнӗ. Ҫапла вара вӑрҫӑ ачисен 10 проценчӗ кӑна паянхи кун ҫӑмӑллӑхпа усӑ курмасть. Манӑн шухӑшӑмпа – ҫавсене "Ӗҫ ветеранӗ" хисеплӗ ят пани вӗсен ӗҫне патшалӑх енчен пысӑка хурса хаклани пулӗччӗ.

Пирӗн хутлӑхра "Чӑваш Республикин ӗҫ ветеранӗ" ята 40 /хӗрарӑмсене/ тата 45 ҫул /арҫынсене/ стаж пухнисене патшалӑх наградисене пӑхмасӑр пама май тупнӑ. 35-40 ҫул ырми-канми ӗҫленисен кӑмӑлӗсене тивӗҫтерме май пурри ҫинчен те калаҫаҫҫӗ. Манӑн шухӑшӑмпа – "Ӗҫ ветеранӗ" ята ҫапла майпа парса ӑна сумсӑра кӑлармалла мар. Нумай ҫул ӗнтӗ ҫак хисеппе ырми-канми ӗҫлесе, общество ӗҫӗнче хастарлӑх кӑтартса патшалӑх наградисене илме тивӗҫ пулнӑ ҫынсене кӑна чыслаҫҫӗ. Халӗ вӑрҫӑ вӑхӑчӗ мар, вӑй хума та, ӗҫлесе илме те май пур – пуҫарулӑх, тӑрӑшулӑхпа хастарлӑх кӑна кирлӗ. Ҫавӑнпа 35-40 ҫул стаж пухнӑ ҫынсене ҫӑмӑллӑхпа тивӗҫтерме каяс нухрата вӑрҫӑ ачисене "Ӗҫ ветеранӗ" ят парса вӗсене уйӑхсерен тӳлесе тӑма ямалла.

Тӑван ҫӗр-шывӑн 1941-1945 ҫулсенчи Аслӑ вӑрҫинче ҫӗнтернӗренпе 70 ҫул ҫитнӗ тӗле ҫак хисеплӗ ята тивӗҫлӗ вӑрҫӑ ачисен статусне ҫирӗплетмелле, вӗсене вӑрҫӑ ветеранӗсемпе танлаштармалла. Урӑхла каласан, патшалӑхӑн хӑй хӳттине илмелле.

Вӗсем хальхи вӑхӑтра пурте тивӗҫлӗ канура. Йышлӑ вара ҫулленех сахалланса пырать – йывӑр тапхӑрта выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурӑнни, сывлӑх хавшани ахаль иртмест. Апла пулин те чылайӑшӗ чунпа ҫирӗп, ҫемье тӗреклӗхне тытса пынипе пӗрлех ҫамрӑксене патриот воспитанийӗ памашкӑн пуҫарулла хутшӑнать.

■ **Илья ЛЕВЫЙ,**
**ЧАССР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, Ҫирӗклӗ Шӑхаль ял тӑрӑхӗн хисеплӗ гражданинӗ, ялти ӗҫ тата вӑрҫӑ ветеранӗсен организацийӗн председателӗ.**
Елчӗк районӗ

---

*Президент саламӗ*

# Юман тете



***Митрофан Митрофанович Упамса ялӗнче йышлӑ ҫемьере ҫуралнӑ. Аслӑ ачисем пӗрин хыҫҫӑн тепри пурнӑҫран уйрӑлнӑран халӑх йӑли-йӗркине пӑхӑнса тата вилӗме улталас тесе ашшӗ-амӑшӗ кӗҫӗн ывӑлне иккӗмӗш ят панӑ. Ҫавӑнпа ӑна ентешӗсем паян кун та Юман пичче тесе хисеплеҫҫӗ. Арлановсем пилӗк пӗр тӑван ҫитӗнчӗҫ. Халӗ Митрофанпа Аксения кӑна юлчӗҫ. Аппӑшӗ кӗҫех 94 ҫул тултарать, шӑллӗ иртнӗ кунсенче 90 ҫулхи менелникне паллӑ турӗ.***

Митрофан Арланова юбилей ячӗпе чысламашкӑн Патӑрьел район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ Валерий Осипов, хӳтлӗх пайӗн ертӳҫи Наталия Никитина, Турхан ял тӑрӑхне ертсе пыракан Александр Сымов тата вӑрҫӑ, ӗҫ, хӗҫ пӑшаллӑ вӑйсен, право йӗркине сыхлакан органсен ветеранӗсен канашӗн председателӗ Иван Хитров ятарласа пычӗҫ, парнесемпе савӑнтарчӗҫ. Валерий Владимирович Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫин вут-ҫулӑмӗ витӗр тухнӑ паттӑр салтака Раҫҫей Президенчӗн Владимир Путинӑн Саламлӑ ҫырӑвӗпе чысларӗ.

...1942 ҫулхи нарӑс уйӑхӗнче 18 ҫул тултарнӑ йӗкӗтӗн салтак ячӗ тухнӑ. Вӑл Смоленск патӗнчи ҫапӑҫусене хутшӑннӑ. Икӗ хутчен аманнӑ. 1944 ҫулта госпитале лекнӗ. Ӑна "Паттӑрлӑхшӑн", "Тӑван ҫӗр-шывӑн 1941-1945 ҫулсенчи Аслӑ вӑрҫинче Германие ҫӗнтернӗшӗн" медальсемпе наградӑланӑ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн вӑл тӑван ене таврӑннӑ, ҫемье ҫавӑрнӑ. Мӑшӑрӗпе Надежда Алексеевнӑпа виҫӗ хӗрпе пӗр ывӑл ҫуратса ӳстернӗ. Ӗҫрен те пӑрӑнман: йывӑҫ комбинатӗнче, колхозра тӑрӑшнӑ, каярахпа страховани агенчӗ пулнӑ. Халӗ Митрофан Митрофанович аслӑ хӗрӗн ҫемйипе пурӑнать. Шел, мӑшӑрӗ 18 ҫул каяллах пурнӑҫран уйрӑлнӑ.

Юман тетен куҫ тулли телейӗ – 11 мӑнукӗ тата вӗсен 10 ачи. Аслашшӗ-кукашшӗ патне тӑтӑшах килсе ҫӳреҫҫӗ вӗсем, унӑн сывлӑхӗпе интересленеҫҫӗ.

Сӑмах май, ял тӑрӑхӗнче хальхи вӑхӑтра вӑрҫӑ ветеранӗсем иккӗн кӑна юлнӑ: Гаврил Полетаев /Тури Тӑрмӑш/ тата Митрофан Арланов.

---

*Ырӑ хыпар*

# Пенси ҫумне – хушӑм

***Ачана ҫулталӑк ҫурӑна ҫитиччен пӑхма уйӑрнӑ тапхӑра 2014 ҫултан пысӑклатнине тӗпе хурса ӗҫ пенсине ҫӗнӗрен шутлаҫҫӗ.***

Асӑннӑ ирӗкпе ачана 1,5 ҫула ҫитиччен пӑхмашкӑн отпуск илнӗ ашшӗ-амӑшӗнчен пӗри усӑ курать. Анчах унӑн тӑсӑмӗ 4,5 ҫултан иртмелле мар. Урӑхла каласан стажа виҫӗ ачана пӑхмашкӑн илнӗ отпуск вӑхӑтне кӗртеҫҫӗ – кашниншӗн 1,5 ҫул.

Ҫӗнӗ йӗрке хальхи тата пулас пенсионерсемшӗн вӑйра тӑрать. Кун пек чухне 2002 ҫул хыҫҫӑнхи ҫакнашкал отпусксен вӑхӑчӗшӗн амӑшӗсене пурне те пенси виҫине шутласа параҫҫӗ, мӗншӗн тесен ӗҫпе тивӗҫтерекенсем ун чухне страховани взносӗ тӳлемен, апла тӑк пенси ӳсӗмне те витӗм кӳмен.

Ачасене 2002 ҫулччен пӑхнӑ вӑхӑта илес пулсан ӗҫ хутшӑнӑвӗнче тӑман, урӑхла каласан тӗрлӗ сӑлтава пула ачасене пӑхнӑ чухне ӗҫ вырӑнӗ пулман амӑшӗсене кӑна хушса параҫҫӗ. Тӗслӗхрен, кил хуҫи хӗрарӑмӗсене тата студентсене...

Ӗҫ хутшӑнӑвӗнче шутланнӑ ашшӗ-амӑшӗнне – ачана 1,5 ҫула ҫитиччен пӑхмашкӑн отпуск илнисенне – асӑннӑ тапхӑрсене пенси виҫи шутлама кирлӗ стажа кӗртнӗ ӗнтӗ. Ҫавна май вӗсен Пенси фондне ҫак ыйтупа пымалла мар.

Нумай ачаллӑ ҫемьесен пенси прависене Пенси фондӗнчи кӑтартусем тӑрӑх пӑхса тухаҫҫӗ. Ача ҫурални ҫинчен ашшӗ-амӑшӗ документ ҫитермен пулсан кирек хӑш вӑхӑтра пырса пама юрать, кун пек чухне пенсие 2014 ҫулхи кӑрлач уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен ҫӗнӗрен шутлаҫҫӗ.

Чӑваш Республикинче ҫулталӑк пуҫланнӑранпа йышлӑ ҫемьеллӗ 2,3 пин ашшӗн е амӑшӗн пенсине виҫҫӗмӗш ачине пӑхнӑ тапхӑра кӗртсе шутласа панӑ. Страхланӑ ҫулталӑкӑн хакне тата отпуск тапхӑрне кура ӳсӗм вӑтамран 55 тенкӗпе танлашнӑ. Страховани стажне ҫак тӗллевпе илнӗ отпускӑн 4,5 ҫулне кӗртнӗ.

2015 ҫулхи кӑрлачӑн 1-мӗшӗнчен ача пӑхнӑ тапхӑрӑн 6 ҫулне шута илеҫҫӗ. Ҫавна май йышлӑ ҫемьесен ашшӗ-амӑшӗн ачисем ҫуралнин документчӗсене Пенси фондне маларах ҫитерсе памалла.

■ **В.ИЛЬИНА**

• ➡ 11, 12 стр.

Хутлĕх

Пĕтĕмлетӳ

# Социаллă тӳлев, амăшĕн капиталĕ...

***Нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕнче РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн канашĕн анлă ларăвĕ иртнĕ. Унăн ĕçне федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров, ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин, Федерацин налук тата суд приставĕсен управленийĕсен, «Чăвашреспрофсовет», Суту-илӳпе промышленноçпалатин, Социаллă страхованин, «Раççей пенсионерĕсен союзĕн» регион уйрăмĕсен, патшалăхăн шутланман пенси фончĕсен, Раççей Перекет банкĕн представителĕсем хутшăннă.***

Роза Кондартьева управляющи 2013 çулхи ĕç-хĕле пĕтĕмлетнĕ. Вăл пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Енри уйрăмăн иртнĕ çулхи тĕллевĕсем пенсие вăхăтра палăртассипе, ăна валли пухнă укçана тӳлессипе, обязательнăй пенси тата медицина страхованийĕсен взносĕсем тĕлĕшпе малтанласа палăртнă плана пурнăçлассипе, патшалăх пулăшăвĕпе пурне те тивĕçтерессипе тата унăн пахалăхне лайăхлатассипе, Раççей пенси тытăмĕн нумай вăхăтлăх аталанăвĕн Стратегийĕ пирки халăха анлăн ăнлантарса парассипе çыхăннă.

Пĕлтĕр республикăри уйрăмăн тупăшĕ 14,8 процент ӳснĕ, 16,1 млрд тенке çитнĕ е прогноз планĕнчен 0,5 млрд тенкĕ иртнĕ. Пенсипе тата социаллă тӳлевсемпе тивĕçтерессин тăкакĕсем 14,6 процент хăпарса 45,6 млрд тенкĕпе танлашнă.

2013 çулта пенсионерсен йышĕ 4,4 пин çын нумайланса 351,6 пин çынна çитнĕ. Ватлăхри ĕç пенсийĕн вăтам виçи 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне 9,6 пин тенкĕ шутланнă е республикăри уйăхри вăтам ĕç укçин 37 проценчĕпе танлашнă тата пенсионера пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçерен 1,9 хут иртнĕ.

Харпăр хăй тупăшĕ ĕç пенсийĕсен страховани пайне тӳлемешкĕн 37 процент кăна çитнипе РФ Пенси фондĕнчен хушма укçа 23,2 млрд тенкĕ уйăрнă.

Страхланă 29,2 пин çынна пенси валли пухăннă нухрат шучĕпе тӳлев панă: чылайăшне пĕр хут – вăтамран 9,5 пин, хăшне пенсипе вăхăтлăх тӳлевĕпе пĕрле – уйăхра вăтамран 0,8 пин, ыттине ĕç пенсийĕн пухăнса пыракан пайĕ шучĕпе – уйăхра вăтамран 0,4 пин.

Ĕçлемен пенсионерсен пурлăх шайне ӳстернĕ май федерацин социаллă тӳлевне тивĕçекенсен йышĕнче çулталăк пуçланнăранпа 964 çын чакнă, 26,5 пинĕн юлнă, вĕсем уйăхсерен 1,2 пин тенкĕ илсе тăраççĕ.

109,4 пин çын федераци çăмăллăхçи шутланать, вĕсен уйăхри укçа тӳлевĕ 1,8 пин тенкĕпе танлашать.

Чăваш Республикин 2013 çулхи социаллă программине финансласа социаллă 2 учреждение тĕпрен юсама тата киле пырса пулăшакан уйрăмсен мобильлĕ бригадисем валли автомобиль туянма 2,9 пин тенкĕ уйăрнă.

2013 çулта амăшĕн капиталĕн сертификатне 8,3 пин çемье илнĕ. Ку енĕпе йышăннă саккун вăй илнĕренпе 49 пин сертификат панă. Унăн укçипе хуçаланмашкăн ыйтса 7,2 пин çын заявлени çырнă, ку кăтарту малтанхи çулхинчен 9 процент нумайрах. Чылайăшĕ /95 процент/ пурăнмалли условисене лайăхлатас тĕллевпе усă курасшăн. Ачисене вĕрентес, çав шутра ясли-сада çӳретнĕшĕн тӳлес текенсем – 5 процент. Сертификат хуçисен çуррийĕ унпа 9 млрд тенкĕлĕх усă курнă.

Страховани взносĕсене администрацилениине илес тĕк ĕçпе тивĕçтерекенсен обязательнăй пенси страхованийĕ енĕпе пухăннă парăмĕ 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне – 396,6 млн, обязательнăй медицина страхованийĕ тĕлĕшпе 74,4 млн тенке çитнĕ.

Йышăннă мерăсене пула пĕлтĕр Пенси фондне 2,85 млрд тенкĕ пырса кĕнĕ.

Патшалăх софинансированийĕн программин саккунĕ вăйра тăнă 5 çулта унта 203,7 пин çын кĕнĕ, çав шутра 2013 çулта – 59,5 пин.

Пĕлтĕр 411,4 млн тенкĕлĕх хушма взнос пухăннă е прогноз кăтартăвĕнчен 2,6 хут нумайрах.

Пенси валли пухăннă укçа-тенке инвестицилесси пирки 59 пин заявлени йышăннă /2012 çулхи шайăн 153 проценчĕ/, çав шутра ĕç пенсийĕн пухăнса пыракан пайĕн страховани взносĕн тарифне суйланисенчен – 7,8 пин.

Страхланă çын вилнĕ хыççăн унăн еткерçисенчен 2,5 пин заявлени йышăннă, вĕсене пенси валли пухăннă укçана 22,7 млн тенкĕ тавăрса панă.

Кулленхи ĕçре пенси служби электрон технологийĕпе анлăн усă курать. 2013 çулта пилот проекчĕпе килĕшӳллĕн республика уйрăмĕн Интернет сайтĕнче ĕçпе тивĕçтерекенсемпе предпринимательсем валли «Тӳлевсĕн харпăр хăй пӳлĕмĕ» электрон сервис ĕçе кĕртнĕ.

Электрон мелĕпе алă пусса çыхăну каналĕпе отчет паракан йышланса пырать, Ку хисеп 98,2 процент, вĕсене уйрăм çыннăн кăтартăвĕсен 99,6 проценчĕпе тивĕçтереççĕ.

Электрон макетпа усă курса ватлăхри ĕç пенсийĕсен 95,7 процентне палăртаççĕ.

Асăннă тапхăрта ведомствăсен хушшинчи 23,3 пин запроса электрон мелĕпе йышăннă. Вĕсен пысăк пайĕ отчет парассипе, социаллă тӳлевсемпе тата пенсисемпе, страховани взносĕсемпе, шалупа çыхăннă.

2013 çулта пенси службин уйрăмне 1,9 пин ыйту çитернĕ: 31 проценчĕ – электрон мелĕпе. Клиент службине 633,1 пин çын пынă. Вырăна тухса ирттернĕ 2,9 пин йышăнура 17,9 пин ыйтăва пăхса тухнă. Skype программăпа усă курса граждансене курав мелĕпе йышăнассине йĕркеленĕ.

Чăваш Республикин Пурлăхĕн Администрацийĕ, влаç органĕсем пулăшнипе, ЧР Общество палати тата Чăвашреспрофсоюз хутшăннипе пенси тытăмĕн нумай вăхăтлăх Стратегине халăх хушшинче анлăн сӳтсе явма пултарнă.

2013 çулта РФ Пенси фончĕн Куславкка районĕнчи управленийĕн администрацин çĕнĕ çуртне хута янă, Элĕк, Патăрьел, Вăрмар, Çĕрпӳ, Етĕрне районĕсенчине тĕпрен юсанă. Тухса çӳреме кансĕр граждансем валли юрăхлă хутлăх йĕркелес тĕллевпе 6 управленире ятарлă хатĕр /ступенькоход/ вырнаçтарнă.

■ **Валентина СМИРНОВА**

Ыйту-хурав

## Пăхса усранăшăн

**Аслă ăрури аттене пăхса усранăшăн компенсаци ыйтас тетĕп. Анчах кӳршĕ пĕлтернĕ тăрăх – çав пособие тивĕçейместĕп иккен, мĕншĕн тесен уйрăм предприниматель шутланатăп. Тĕрĕссипе, ку енĕпе ĕçлеместĕп те.**

**З.ПЕТРОВА.**

Саккунпа килĕшӳллĕн пурнăçа хăй тĕллĕн тытса пырайман çынна пăхса пурăннăшăн тивĕçекен тӳлеве ĕçлеме пултарайман гражданина е шалу илсе тăракана памаççĕ.

Эсир ĕçлеместĕр тĕк РФ ФНС инспекцине çитсе тупăш çуккине çирĕплетекен справка илмелле. Çакнашкал документ пурри не пăхмасăр РФ Пенси фончĕ тӳлеме килĕшмесен ыйтăва прокуратурăра е судра хускатмалла.

Патшалăх пулăшăвĕ

## Сертификат илчĕç



Нарăсăн 25-мĕшĕ вĕсемшĕн чăннипех телейлĕ кун пулчĕ – РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн управляющийĕн çумĕ Ирина Коннова тата Элĕк район администрацийĕн пуçлăхĕ Александр Куликов амăшĕн капиталĕн сертификатне чаплă лару-тăрура пачĕç. Олеся Григорьева /Элĕк/, Альбина Архипова /Мăн Шĕвĕш/ ăна çемьери иккĕмĕш ачашăн тивĕçрĕç, Татьяна Павлова /Тимĕрçкасси/ – виççĕмĕшĕшĕн, Наталия Иванова /Элĕк/ тата Лариса Баранова /Яккушкăнь/ – тăваттăмĕшĕшĕн.

Палăртма кăмăллă: 2014 çул пуçланнăранпа пенси службин районти управленине амăшĕн капиталĕн сертификатне илес текенсенчен 16 заявлени йышăннă. 2007 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен ăна районти 882 çемье тивĕçнĕ.

Пенси фончĕн хыпарĕсем

## Пуçаруллă усă кураççĕ

***РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕ пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Енре пурăнакан 50 пин ытла хĕрарăм çемье капиталĕн сертификатне илнĕ, вĕсен çуррийĕ унăн укçипе 9 млрд яхăн тенкĕлĕх усă курнă.***

Сертификат хуçисем хăйсене панă ирĕкпе пуçаруллă усă кураççĕ – ку енĕпе йышăннă саккун вăйра тăнă тапхăрта унăн укçипе хуçаланма ыйтса çырнă заявленисен 25 процентне пĕлтĕр тивĕçтернĕ.

Амăшĕн капиталĕ шучĕпе пурăнмалли условисене лайăхлатас тĕллевлисем уйрăмах йышлă: 21 пин çемье унпа ипотека кредитне татнă, 5 пинĕшĕ суту-илӳ килĕшĕвĕ тăрăх çурт-йĕр туяннă, строительство организацийĕсене хутшăнтармасăр çурт çĕкленĕ е малтанхине çĕнетсе улăштарнă, лартнишĕн е реконструкциленишĕн компенсаци илнĕ. Ачаллă çемьесен пурăнмалли условийĕсене лайăхлатмашкăн патшалăх пĕтĕмпе уйăрнă укçа 8,7 млрд тенкĕпе танлашнă.

Аслă ачисене 653 çемье университет-институтра тата колледжра амăшĕн капиталĕн шучĕпе вĕрентме йышăннă, çавсенчен 9-шĕ пĕлӳ илнĕ тапхăрта общежитире пурăннăшăн тӳлеме усă курнă. Тата 168 çемье унăн укçине ачисене ясли-садике çӳретнĕшĕн тăкаклать. Çак тĕллевпе вĕренӳ учрежденийĕсене пĕтĕмпе 24 млн тенкĕ куçарнă.

Çемье капиталĕпе амăшĕн пулас пенсине пысăклатас тĕллевлисем Раççейре 2 пин çынна яхăн тăк пирĕн республикăра унашкаллисем çук-ха.

Капитал суммине тата унăн усă курса пĕтереймен висине инфляци шайне тĕпе хурса çуллен пысăклатаççĕ. Кăçал ăна 5 процент ӳстернĕ – амăшĕн капиталне 429408 тенке çитернĕ.

## Йышăнăва – Интернет урлă

***Электрон мелĕпе йĕркеленĕ çĕнĕ сервис пулăшнипе граждансем йышăнăва пымашкăн хăйсене меллĕ вăхăта суйласа илсе çырăнма, çавăн пекех документсемпе справкăсем хатĕрлеме саккас пама пултараççĕ.***

Пенси фончĕн сайтĕнче /www. pfrf.ru/pred zapis/./ çырăнма пулать. Хальлĕхе асăннă сервис эксплуатацин сăнав мелĕпе ĕçлет. Чăваш Республикинче çак пулăшупа усă куракансем пур ĕнтĕ.

РФ Пенси фончĕн территори управленийĕсенче те телефонпа шăнкăравласа е пырса йышăнăва маларах çырăнма май килет. Палăртнă вăхăтра çитме май çук тăк кун пирки пĕлтерсе тĕл пулăва тепĕр вăхăта куçарма юрать.

■ **В.ИЛЬИНА**

• ➡ 12 стр.

Хӳтлӗх

*Ӗҫ шыраса*

# Нуша хӑвалать...

Висӗм ҫул Воронеж облаҫӗнчи садсене ӗҫлеме кайсан: «Каллех чӑваш айванӗсем килчӗҫ», – тени асрах-ха. Ҫапла мӑн кӑмӑллӑн тиркенин сӑлтавӗ пуриншӗн те паллӑ: вырӑнти халӑх хӗрӗх ҫухрӑмра вырнаҫнӑ Воронеж хулинчи промышленноҫ, коммерци предприятийӗсене ӗҫлеме ҫӳренӗрен укҫа-тенкӗрен чухӑн мар паллах. Кӑшт маларах Мускав облаҫӗнчи Чулково поселокӗнче пахча ҫимӗҫ суйласа «укҫа ҫапса» таврӑннӑ Шупашкар районӗн ҫынни ун чухне ҫапла каланӑччӗ: «Воронежри условисем Чулковӑринчен лайӑхрах. Унта кӑнтӑрла кӑна апатлантаратчӗҫ, ирӗн-каҫӑн – хамӑр шутран...»

Шупашкар хулинчи ӗҫпе тивӗҫтерекен центрта та ҫавнах ҫирӗплетрӗҫ. «Талӑкра пӗр хут кӑна ҫитереҫҫӗ. Хӑварпа пӗрле савӑт-сапа илӗр. Малтан аванс шучӗпе кӑштах укҫа парӗҫ», – терӗҫ.

Унта ҫитсе вырнаҫрӑмӑр кӑна, хамӑр пирки: «Чӑваш ӗҫкӗҫисем килчӗҫ», – тесе сӑмах сарни хӑлхана кӗчӗ. Ҫакӑ чӑнлӑхпа кӗҫех пӗр килчӗ.

...Пире кирпӗчрен купаланӑ икӗ хутлӑ общежитие вырнаҫтарчӗҫ. Ҫывӑрмалли нарсем – хӑмаран, вӗсем ҫине ҫӳхе тӳшек сарнӑ. «Пуймашкӑн» ҫакӑнта ҫитиччен килнӗшӗн хӑшӗ-пӗри кӑмӑлсӑрланчӗ те. Ҫав вӑхӑтрах «Кунне Воронежри пек 200 тенкӗ мар, 500 тенкӗ тӳлеҫҫӗ», – тесе шантарни иккӗленӗве сирчӗ пулмалла. Пахча ҫимӗҫ управӗнче витӗр касакан ҫиле, сивве пӑхмасӑр пӗр эрне ытла кӑшман, ҫӗр улми суйланӑ хыҫҫӑн кашнине икшер пин тенкӗ пачӗҫ. Сӑмах май, кунта ытти ҫул ӗҫленисем тавҫӑрулларах пулчӗҫ: килтен илсе килнӗ савӑтра хамӑр суйлакан пахча ҫимӗҫрен ирӗн-каҫӑн апат хатӗрлерӗҫ. Пирӗн пеккисен вӗсене ӑмсанмалли кӑна юлчӗ. Аванс шучӗпе панӑ укҫапа хырӑма улталамалӑх тесе лавккаран кӗрпе-макарон туянтӑмӑр.

Укҫа панӑ чухне хуҫалӑх управляющийӗ малтанах асӑрхаттарчӗ: «Хаяррине сыпакансем паян пуласси иккӗлентермест. Анчах ан манӑр: ыран пурин те ӗҫе тухмалла, унсӑрӑн явап тытма тивӗ»....

Вунӑ ҫухрӑмри управа пире автобуспа илсе каяҫҫӗ, килсе яраҫҫӗ. Ӗҫрен таврӑннӑ чухне общежитирен инҫех мар вырнаҫнӑ лавкка умӗнче Шупашкар ҫамрӑкӗсемпе пӗрле эпӗ те анса юлтӑм. Шала кӗпӗр-р кӗрсе тӑрсан тавар туянма пынӑ ҫынсем пире ирӗксӗрех ҫул пачӗҫ. Чылайӑшӗ, ҫав шутра хӗрарӑмсем те, эрех черетне тӑчӗ. Управляющи сӑмахне асра тытса апат-ҫимӗҫӗр пуҫне пӗр кӗленче сӑра кӑна туяннипех ҫырлахрӑм.

Манпа юнашар нар ҫинче выртса тӑракан Семен И. хаяррине ҫур литр пушатнӑ хыҫҫӑн «сӑрт-ту тӑрӑх утма» пуҫларӗ. Ыттисем хӗсӗк коридорти икӗ сӗтел ҫине тем самантра эрехсӑра, саккуска лартса тултарчӗҫ. Каярах ҫакна пӗлтерчӗҫ: ватӑ хусах Виталий И. ҫуралнӑ кунне паллӑ тӑвать иккен. Шупашкар каччипе Игорьпе унта хутшӑнас темерӗмӗр.

Ӗҫкӗ малалла тӑсӑлчӗ: кӗленчесем пушансан талӑкӗпех сутӑ тӑвакан лавккана пӗрре кӑна мар хутларӗҫ. Унтан юрлама пикенчӗҫ. Вырӑсла, украинла... Чӑвашла пӗр ҫаврӑм та тумарӗҫ. 23 ентешрен пӗри те пулин «Ма хитре-ши Шупашкар урамӗ?» юрра тӑсса яринччӗ. Ҫук, итлесси пулмарӗ. Ӗҫкӗ-ҫикӗ ҫур ҫӗр иртсен 2-3 сехетре кӑна вӗҫленчӗ.

Ирхине 7 сехет ҫурӑра ӗҫе илсе ҫӳрекен автобус ҫитсе чарӑнчӗ. Ыттисене кӗтсе илеймennипе управа ҫиччӗнех ҫитрӗмӗр.

«Ӗҫе тухманнисене 1,5 пин тенкӗ штраф тӳлеттересси пирки хушу кӑлартӑм», – пӗлтерчӗ управляющи. Тепӗр икӗ кунран «чӗрӗлнӗ» штрафниксем пире тарӑхрӗҫ те, ӑмсанчӗҫ те.

Киле маларах кайма ирӗк панине шута илсе Шупашкара пуҫтарӑнтӑм. Мускава илсе ҫитернӗшӗн ҫул укҫине саплаштармалӑх кӑна мар, тӑван ене таврӑнмашкӑн билет туянмалӑх та ӗҫлесе илме пултартӑм.

«ГАЗель» маршруткӑпа Мускаври метро станцине ҫитрӗм, ҫур сехетрен – Хусан вокзалне. «Шупашкара ҫур ҫӗр иртни пилӗк минутра экспресс-пуйӑс каять, ыран кӑнтӑрла иртсен висӗ сехетре унта пулатӑр», – терӗ кассир билет сӗннӗ май. Ҫула чиперех тухрӑм темелле. Лайӑх хупламан чӳречерен сивӗ вӗрни кӑна кӑмӑла хуҫрӗ.

Ку ҫеҫ мар-ха, киле таврӑнсан пула аптраса ӳкрӗм. Хула больницинче чир шала кайнине палӑртрӗҫ, стационара вырттарма йышӑнчӗҫ. Анчах сиплекен тухтӑр темиҫе кунран: «Вырттармасан та темех марччӗ, кӑнтӑрла килсе сипленме пултараттӑнччӗ», – тесе пӗлтерчӗ.

Ним калама аптранӑ енне: «Тен, Явӑша тӳрех кайса вырттармаллаччӗ. Унта этем пурнӑҫӗнчи юлашки диагнозпа пӗр сӑмахсӑрах йышӑнаҫҫӗ», – теме кӑна пултартӑм.

Ҫӳретӗп ҫапла паян кунччен чӑхӑмлатса та ӳсӗрсе. Мускав чире ячӗ мар-и... Килтен тухман тӑк ҫакна курман пулӑттӑм. Нуша хӑвалать ҫав пире...

■ **Александр МОКИН.**
Шупашкар хули

*Чунри*

# Анна аппа пулӑшу кӗтет

Патӑрьел районӗнчи Тикеш ялӗнчи Анна Кириллова ҫуралнӑ кунне йывӑр операци хыҫҫӑнхи тапхӑрта кӗтсе илчӗ.

«Хирург ҫӗҫҫи айне лекессе нихӑҫан та шухӑшламан», – тет Анна аппа. Анчах инкек куҫа курӑнса килмест теҫҫӗ вӗт. Вӑл СССР Аслӑ Совечӗн депутачӗ пулнӑ И.Барышников ячӗллӗ урамра пурӑнать. Районта кӑна мар, республикӑра та палӑрнӑ «Герой» колхозӑн Илья Егорович ертсе пынӑ бригадинче тивӗҫлӗ канӑва тухиччене ӗҫленӗ вӑл.

Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫин вӑхӑтӗнче те, ун хыҫҫӑнхи ҫулсенче те ырми-канми тӑрӑшнӑ. Ветеринар специальноҫне илнӗскер Тикеш ял тӑрӑхне кӗнӗ хуҫалӑхсенчи выльӑх-чӗрлӗх сывлӑхне 1947-1957 ҫулсенче тӗрӗслесе тӑнӑ. Анчах ҫакна ӗҫ кӗнекинче паллӑ туман, ахаль колхозница пек кӑна кӑтартса хӑварнӑ /Инкеке пула 1988 ҫулта, «Герой» колхоз кантурӗ ҫунса кайнипе хуҫалӑх членӗсем ӗҫленине ҫирӗплетекен документсем те кӗленнӗ. Ҫавна май пенсие тухакансен стажа ҫирӗплетессишӗн чылай йывӑрлӑха ҫӗнтерме тивнӗ/.

Ун хыҫҫӑн Анна аппа хуҫалӑх ӗҫне куҫнӑ: пӑрҫа сулнӑ, ҫурлапа тырӑ вырнӑ, йӗтем ҫинче тар тӑкнӑ. Ку ҫеҫ-и? Ятран уйӑрса панӑ ҫӗр ҫинче ҫу кунӗсенче ачисемпе пӗрле уй-хир культурисене ҫум курӑкран тасатса тӑнӑ.

Хура-шурне пурнӑҫра сахал мар курма тивнӗ. 1961 ҫулта иккӗмӗш ывӑлне – тӑваттӑри Петюка – ӳсӗр ҫынсен айӑпӗпе лаша таптанӑ; ҫуна айне пулнӑскере урхамах ҫурхи шыв тӑрӑх ик ҫӗр метра яхӑн сӗтӗрсе кайнӑ. Темле майпа вӗҫерӗнсе юлнӑ вӑл, турӑ пулӑшнӑ пулинех...

Амӑшӗн вара ҫав кунран ахӑр самана пуҫланнӑ. Асапланакан тӗпренчӗкне Шупашкарти больницӑна леҫнӗ. Упӑшки ывӑлӗпе юнашар пулас тесе ҫав вӑхӑтра сыватмӑш валли вутӑ ҫурса пурӑннӑ. Ку та пулӑшман – ача пурнӑҫне тухтӑрсем ҫӑлса хӑварайман.

1977 ҫулта Анна аппан мӑшӑрӗ те сарӑмсӑр вилнӗ. Виҫӗ ачине вӑл пӗччене ура ҫине тӑратнӑ, никамран та хӳтлӗх кӗтмен.

«Ман пек ватӑ ҫынсене патшалӑхӑн пулӑшмалла пек ӗнтӗ, – тет тепӗр чухне тыл ӗҫченӗ тата ӗҫ ветеранӗ. – Пенси те пӗчӗк /сакӑр пин тенкӗрен кӑшт кӑна иртет/, пурнӑҫӗ те хӗсӗк».

Вӑрҫӑ вут-ҫулӑмӗ витӗр тухнӑ ветерансем Тикеш ялӗнче юлман темелле. Тыл ӗҫченӗсем те сахалланса пыраҫҫӗ – халӗ вуннӑн кӑна. Вӗсенчен пӗри – Анна Кириллова.

Районти Туҫа ял тӑрӑхӗнче вӑрҫӑ ветеранӗсемпе салтак арӑмӗсен тата тыл ӗҫченӗсен хваттер условийӗсене лайӑхлатассишӗн чӑннипех тӑрӑшаҫҫӗ, унта 40 ҫынна пулӑшма май тупнӑ.

Тикеш тӑрӑхӗнче вара унашкаллине кӗтсе илеймӗн. Анна аппанах илер. Пӳрчӗ кивелнӗ унӑн. Ӑна ятарлӑ комисси тӗплӗн хакланӑ хыҫҫӑн пурӑнма юрӑхсӑр пулнине ҫирӗплетнӗ. Ҫавна пулах Анна Демьяновна Шупашкарта пӗр пӳлӗмлӗ хваттерте тӗпленнӗ хӗрӗн ҫемйинчи кухньӑра иккӗмӗш ҫул хӗл каҫать. Ӗмӗрӗпе тӑван хуҫалӑха тӗреклетессишӗн тӑрӑшнӑ чирлӗ ентешӗн ватлӑх кунӗсем еплерех иртнипе интересленекен тӑван тӑрӑхра ҫукки чӑннипех тӗлӗнтерет.

Юлашки вӑхӑтра ӑна сусӑр ывӑлӗ пӑхрӗ, больницӑра та унпа пӗрле пулчӗ. Хӗрӗсемпе мӑнукӗсем те май пур таран пулӑшаҫҫӗ. Анчах вӗсен хӑйсен те пурнӑҫӗ хӗсӗк-ҫке.

Сакӑр вун тӑхӑр ҫула кайнӑ тыл ӗҫченӗ, йывӑр чире пула инвалид пулса тӑнӑ хӗрарӑм ватлӑх кунӗсене хӑй килӗнче ирттересшӗн – ӑна юсамашкӑн вырӑнти хӑй тӑтӑмлӑх органӗсем пулӑшасса кӗтет вӑл.

■ **Т.ГРИГОРЬЕВ.**
Патӑрьел районӗ,
Тикеш ялӗ

*Сывлӑх*

# Ӳкессе пӗлнӗ пулсан...

Ҫур енне сулӑннӑ май ҫанталӑк улшӑнуллӑ тӑрать: е сивӗтет, е ӑшӑтса ярать. Ҫавна май утма ҫулсем пӑрпа витӗнеҫҫӗ. Кун пек чухне шуса ӳксе аманас хӑрушлӑх пур. Сиплев учрежденийӗсене алӑ-урана хуҫнипе е пуҫ мимине чӗтретнипе пыракансем йышланни те ҫакна ҫирӗплетет. Йывӑр суранланнисем сахал мар, вӗсене вӑрах вӑхӑт сиплемелле, хӑшнепӗрне операци туни кӑна пулӑшма пултарать.

Чылай чухне алӑ – чавсапа пӳрне таран – ытларах сиенленет. Ахальтен мар паллах. Ӳкнӗ самантра шутламасӑрах ӑна малалла тӑсатпӑр вӗт – пӗтӗм кӗлеткепе ун ҫине тӗршӗнетпӗр. Аяк ҫине ӑнӑҫсӑр ҫаврӑнса ҫапӑннӑ чухне хул шӑммине амантма пулать. Ура ҫине ӳксен унӑн туни сиенленнӗ тӗслӗх сахал мар. Хӗрарӑмсене ҫӳллӗ кӗлеллӗ пушмакпа ҫӳрени ҫакӑн патне илсе пырать. Аслӑ ӑру ҫыннисем – ҫурӑм, пӗҫӗ шӑммисене амантаҫҫӗ. Пӗҫӗ шӑммин вӗҫне хуҫни уйрӑмах хӑрушӑ. Ҫакнашкал инкеке лекнисен 95 проценчӗ – хӗрарӑмсем.

Урамра сусӑрланассине сиресси пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх тытӑмӗ хӑйӗн ӗҫне еплерех йӗркеленипе тачӑ ҫыхӑннӑ: тротуарсене хӑйӑрпа тӑвар хутӑшӗ, ятарлӑ реагент вӑхӑтра сапмалла, картишне ҫутатса тӑмалла тата ытти те.

Хамӑрӑн та тимлӗ пулмалла, йӗркене пӑхӑнмалла. Ҫулсем шуҫлак пуласси пирки пӗлтернине илтсен шутарман атӑ-пушмак тӑхӑнмалла. Каучук е резинӑран хатӗрленӗ картлӑ-картлӑ тӗплипе, лутра кӗлелли меллӗрех тата шанчӑклӑрах. Шуса ӳксрен ятарлӑ хатӗрсемпе усӑ курма юрать е атӑ тӗпне поролон, лейкопластырь, изолента ҫыпӑҫтармалла. Ӑна хӑйӑрпа /наждак хучӗпе/ сӑтӑрма та сӗнеҫҫӗ.

Ҫӑмӑл тум – куртка, пуховик – тӑхӑнмалла, мӗншӗн тесен йывӑррине кӳлепене тӳрӗ тытма кансӗр.

Васкамасӑр, асӑрханса, ура айне тимлӗн сӑнаса утӑр, кӗле ҫине кӑна мар, атӑ-пушмак тӗпӗ ҫине пусӑр. Алла кӗсьене чикмелле мар, саркаласа пымалла. Тӗрев пур тӑк унран тытӑр. Тротуарӑн якалса ҫитмен хӗррипе ҫӳрени сиенсӗррине шута илӗр. Юртан тасатман тата ҫутатса тӑман картишӗсенчен пӑрӑнса иртӗр.

Ура шуса кайрӗ тӗк тӳрех ларӑр, ӳкнӗ чухне кӗлеткене пӗр ҫӗре пуҫтарса ҫаврӑнса каймалла тусан ҫапӑну вӑйсӑртарах пулать.

Аслӑ ӑру ҫыннисен кун пек чухне тухса ҫӳреме тӑхтамалла, апат-ҫимӗҫ туянса памашкӑн ачасенчен е кӳршӗсенчен ыйтмалла. Апла тума май килмесен алла шӗвӗр вӗҫлӗ туя тытӑр.

Ҫул-йӗр инкекӗ – чи йывӑрри.



Ҫул урлӑ каҫнӑ чухне йӗркене пӑхӑнӑр, ачӑрсене те ҫавнах вӗрентӗр. Шуҫлак ҫӗрте автомашинӑн тормоз «тӑсӑмӗ» чылай вӑрӑмланни пирки ан манӑр.

Енчен те инкеке сиреймерӗр, ӳкрӗрех тӗк чиксе ыратнине е пуҫ ҫаврӑннине туйсан «Васкавлӑ пулӑшу» чӗнсе илмешкӗн иртенҫӳренрен ыйтӑр, травматологи пунктне кайӑр. Медицина пулӑшӑвне ҫийӗнчех тивӗҫни сиплев тапхӑрне кӗскетет.

Асӑрханулӑхпа тимлӗх сире шуҫлак ҫул ҫинчи инкекрен хӑтарӗҫ. Сывлӑхӑра упрӑр.

■ **Мария ТОЯБИНСКАЯ,**
**республикӑри вӑй-хала аталантаракан сиплев тата реабилитаци центрӗн уйрӑмӗн врачӗ**

**Кӑларӑма Валентина СМИРНОВА хатӗрленӗ.**

## МĔН ÇЫРАÇÇĔ ХАÇАТСЕМ

# Çăлтăрсем океан леш енче хваттерсем туянаççĕ

***Çулталăк хушшинче Майамире куçми пурлăх хакĕсем 20% яхăн ÿснĕ.***

– 2008 çулхи кризис хыççăн Майамире пурăнмалли çуртсем тăвасси чарăнса ларнă, куçми пурлăх рынокĕ арканнă. Юлашки 2 çулта ку енĕпе лару-тăру йĕркеленме пуçланă, тăваткал метрсен хакĕ ÿснĕ, паян та ÿсе пырать. Çавăнпах Раççей олигархĕсемпе çăлтăрĕсем перекетленĕ укçи-тенкине Майамири çурт-йĕре хываççĕ, – тенĕ океан леш енчи çак курорт вырăнĕнче 10 çул ытла ĕçлекен Павел Дмитриев риэлтор.

– Тĕслĕхрен, Филипп Киркоров хĕрĕ Алла-Виктория çуралнă тĕле чаплă йышши урамра Ла Горсра çурт туяннăччĕ. Çак çуртăн ун чухнехи хакĕ 4 млн долларччĕ.



Халĕ хак пĕр хут çурă ÿснĕ. Çапла вара Киркоров хăйĕн çуртне сутас тесен нимĕн те çухатмасть, укçа ĕçлесе илет çеç.

Сăмах май, Майами хулинчи куçми пурлăх базин даннăйĕсемпе килĕшÿллĕн – юрăçăн çак çурт çеç. Бал Харбор районĕнчи Кристина Орбакайтепе кÿршĕллĕ пентхаус унăн харпăрлăхĕнче шутланмасть. Филипăн ăна сутма тивнĕ пулас. Кунта хваттершĕн уйăхне темиçе пин доллар тÿлемелле.

Бал Харбор районĕнче чи пуян та паллă çынсем пурăнаççĕ. Хваттерсем унта 2 млн доллар тăраççĕ.



### *Нумайăшĕ вырăс тăваткалĕнче пурăнать*

Валерий Леонтьев çак çăтмах кĕтесĕнче 4 йăва таранччених çавăрнă. Юрăç Майами çывăхĕнчи çурчĕ пирки пĕрре кăна мар каласа кăтартнă.

Чаплă çак çуртсăр пуçне /риэлторсем хакланă тăрăх – вăл 5 млн яхăн доллар тăрать/ артистăн Майамире тата 2 хваттер, пысăках мар çурт пур. Пĕр хваттерĕ хулан тĕп урамĕнче. Хăй унта пурăнман чухне Леонтьев ăна арендăна парать.

Юлия Бордовских телеертÿçĕпе мăшăрĕн Алексей Кравцов бизнесменăн хула варринчен инçех мар 2 хваттер.

Хваттерсем унта Бал Харбортинчен йÿнĕрех. 300 тăваткал метрлисене /çывăрмалли 2 пÿлĕмпе/ 400 пин доллар тÿлесе илме пулать.

Артистсемпе бизнесменсен пысăк пайĕ вырăс тăваткалĕ текен çĕрте вырăн тупнă. Вырăнти çынсем кунта сайра хутра çеç хваттерсем туянаççĕ, мĕншĕн тесен ытларах Раççейрен тухнисем пурăнаççĕ. Океан çывăхĕнчи пĕрремĕш тăрăхри çуртсенчи хваттерсем халĕ унта 500 пин доллар тăраççĕ.

Игорь Николаевпа Юлия Проскурякова, Леонид Агутинпа Анжелика Варум, Наташа Королевăпа çемйи те «вырăс тăваткалĕнче» вырнаçнă.

Николаевăн океан çывăхĕнчи пĕрремĕш тăрăхра 2 хваттер. Çавнашкал хваттерсем унта – 700 пин доллартан пуçласа. Анжелика Варумпа Леонид Агутинăн – 3 хваттер. Пĕри – Майамири чи хаклă çуртпа юнашар.

– Нумай хутлă çурта вĕçлесе пыраççĕ, хваттерсенче отделка ĕçĕсем тăваççĕ. Анчах та çурт-йĕр çав тери хаклă пулĕ, – прогноз парать Павел Дмитриев риэлтор. Чи хаклă хваттере акă 55 млн долларпа сутаççĕ.

### *Пенсионерсемпе машина юратакансемшĕн чăн-чăн çăтмах*

Винсен-тауэр океан çывăхĕнчи иккĕмĕш тăрăхра вырнаçнă. Кунта пурăнакансем çак комплекса Раççейрен куçса пынă ватăсен çурчĕсем теççĕ. Тĕпрен илсен унта – пĕрремĕш тăрăхри çынсен ашшĕ-амăшĕ. Нумай хутлă çуртсенчен пĕринче Наташа Королева амăшĕ Людмила Порывай кун кунлать.

Хăйсен лимузинĕсенчен уйрăлас темен вырăс пуянĕсем валли Майами варринче хăйне евĕрлĕ çурт туса лартнă.

– Хваттере автомобильпех кĕме пулать. Кашни хваттерте 2-4 машина лартма вырăн уйăраççĕ, – тенĕ «Комсомольская правда» хаçата куçми пурлăх енĕпе ĕçлекен специалист.

– Водитель ятарлă лифта кĕрет; вăл çынна хăйĕн гаражне илсе çитерет. Хваттерсенче пурăнмалли пÿлĕмсене гаражран кантăк стенасем уйăрса тăраççĕ. Çак çуртри хваттерсен хакĕсем 4,5 млн доллартан пуçласа. Сăмах май, çавнашкал пуянлăхшăн вырăссем çеç укçа тăкаклама хатĕр.

■ **Мария РЕМИЗОВА.**

/«Комсомольская правда»/

***Пулать вĕт!***

# Машинăран... çичĕ машина вăрланă

***Нумаях пулмасть Мускав çыннисене хăйĕн бизнесне йĕркеленĕ хĕрарăма тĕп хулара çаратни питĕ тĕлĕнтерне.***

Преступлени нимĕнпех те палăрса каймасть темелле – Мускавăн кăнтăр енчи лăпкă районĕнче машинăран сумка вăрланă. Анчах та... Вăл симĕс питон тирĕнчен çĕленĕ «Биркин» сумка пулнă. Инкек тÿсекенĕ – 45 çулти Ляна Фридман – 3 млн та 600 пин тенкĕлĕх тăкак тÿснĕ тесе пĕлтернĕ. Хваттер хакĕ вĕт! Раççейре нумайăшĕ пурăнмалли хваттершĕн, операцишĕн тÿлеймест. Çав вăхăтрах хăйне евĕрлĕ сумкăшăн тĕлĕнмелле пысăк укçа тăкаклама хатĕр çынсем те пур.

Кам-ха вăл Ляна Фридман? Акă нумай çул ĕнтĕ хĕрарăм музыка, литература каçĕсем, куравсем йĕркелет. Çаксем, паллах, чухăнах мар çынсем валли. Фридман госпожа ирттерекен каçсенче Европăри, тĕнчери бизнеспа, политикăпа, ÿнерпе çыхăннă çынсем, спортсменсем – Пол Маккартни, Элтон Джон, Катрин Денев, Фанни Ардан – пулнă. Раççейре пурăнакансенчен унпа Бари Алибасов продюсер лайăх хутшăнусенче. Сăмах май, Фридман нумай çул чикĕ леш енче пурăннă. Раççее 2010 çулта килнĕ, бизнеспа аппаланма пуçланă.

Хĕрарăм медицина компанийĕ – стоматологи клиники – уçнă. Çав каçхине вăл ĕçпе пынă пулас. Çĕрле 11 сехет çитеспе картишне «Бентли Континенталь» машинипе пырса чарăннă.

Хурах йăлана кĕнĕ йĕркепе «ĕçленĕ». Вăл машина чÿречинчен шакканă, ыттисене шанакан хĕрарăм уçнă. Хăй йăнăш тунине ăнланнă – палламан арçын пассажир лармалли вырăнтан сумкăна ярса илнĕ те чÿречерен туртса кăларнă. Фридман сăмах та чĕнсе ĕлкĕреймен, арçын машина ăшне чăмнă, ăна хускатса вĕçтере панă. Веçех çав тери хăвăрт тата тĕттĕмре пулса иртнĕ.

– Питĕ ăслă хĕрарăм, шÿте лайăх ăнланать, – çапла шухăшлать Бари Алибасов бизнесмен пирки.

Бари Каримович каланă тăрăх – Фридман госпожапа пĕрле вĕсем Мускавра шалкăм çапнипе аптракан ачасен интернат шкулĕнче пурăнакансене час-часах пулăшаççĕ. Нумаях пулмасть ачасене компьютер техникипе тивĕçтернĕ.

Хаклă йышши сумкăна илес пулсан – продюсер те шÿтлесе, те чăнласах Фридманăн вĕсем пĕтĕмпе 18 штук пулнине пĕлтернĕ. «Сумка унăн хакне пĕлмен çын аллине лекнĕшĕн кăмăлĕ пăсăлчĕ-тĕр», – шÿтлет Алибасов.

Çухатнă сумка – эксклюзив. Çак фирма кăларакан япаласен хакĕ – 9-150 пин доллар. Кашни сумкине алăпа çĕлеççĕ. Фридман сумкине симĕс питон тирĕнчен çĕленĕ, пĕтĕмĕшле илсен компани пăру, крокодил, страус, калта тирĕнчен çĕленĕ япаласем сĕнет. Сумкăсене хаклă йышши чулсемпе те илемлетме пулать, паллах, кун пек вĕсем татах та хакланаççĕ. Питех те хаклă пулин те хăшпĕрне туянма черете те тăраççĕ. 6 çул кĕтни те пулать. Сăмах май,




«Биркин» фирма кăларакан сумкăсем Ксения Собчакпа Божена Рынски журналисткăн пур.

«Биркин» сумка – вăл:

●Мускав çывăхĕнчи пĕр пÿлĕмлĕ хваттер,

●7 «Лада-Калина» автомобиль,

●128571 буханка çăкăр,

●12000 хĕлене шурă эрех /вăтам хакпа/

■ **Екатерина СВЕШНИКОВА.**

/«Московский комсомолец»/

*Тĕслĕх*

# «Улăпсем» сывă пурнăç йĕркишĕн

***Кÿкеç поселокĕнче «Улăп» спортпа сывлăх комплексĕ уçăлнине Шупашкар районĕнче пурăнакансем хапăлласа йышăннă. Унсăрăн епле-ха! Çĕнĕ те хăтлă керменте хĕлĕн-çĕвĕн бассейнра шыва кĕме май пур, тренажер залĕ те кашнинех тарават, спортзалта çутă та таса. Унта кунĕпех çын татăлмасть. Мĕнлерех пурăнать-ха çынсене спортпа туслаштаракан, сывлăха çирĕплетме пулăшакан учреждени? Çак ыйтăвăн хуравне Кÿкеçри спортпа сывлăх комплексĕн директорĕн çумĕ Надежда НИКОЛАЕВА тупма пулăшрĕ.***



### *Йыш ÿснĕ*

Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ 1980 çулта уçăлнă. Çак тапхăрта кунта чылай çамрăк вĕренсе тухнă, вун-вун спортсмен республика тата çĕр-шыв ăмăртăвĕсенче палăрнă. 2007 çулта поселокра çĕнĕ кермен хута кайнăранпа районта сывă пурнăç йĕркине тытса пыракансен йышĕ самай ÿсрĕ. ЧР Физкультурăпа спорт министерстви 2011-2012 çулсенче ирттернĕ смотр-конкурсра «Улăп» пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Хальхи вăхăтра шкулта спортăн тĕрлĕ енĕпе 13 уйрăм ĕçлет, унта 1190 вĕренекен ăсталăха туптать. Ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсен /298 çын/, йĕлтĕрçĕсен /139/, ишевçĕсен /249/ секцийĕсене ачасем уйрăмах йышлă çÿреççĕ. Вĕренÿпе хăнăху занятийĕсем учрежденин малтанхи çуртĕнче, ФСКра, Тутаркассинчи кĕрешÿ залĕнче иртеççĕ, çавăн пекех спорт шкулĕн уйрăмĕсем районти 11 вăтам шкулта пур. 31 тренер-преподаватель ĕçлет.

Кÿкеç тăрăхĕнчи çынсене сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарас тата спортпа туслаштарас тĕллевпе Шупашкар район администрацийĕн пуçлăхĕ Георгий Егоров та чылай ĕç пурнăçлать. Акă пĕлтĕр вăл пире пысăк парнепе савăнтарчĕ – ял ачисене спорт керменне илсе çÿремешкĕн шкул автобусĕ туянса пачĕ.

### *Стадион – пирĕн пуянлăх*

2004 çулта поселокра çĕнĕ стадион ĕçлеме тытăннă. Футбол уйĕнче кашни çул вун-вун ăмăрту иртет, çамрăк футболистсем /тренерĕсем – Александр Балыбердин, Андрей Красных/ кунсерен мечĕк хăвалаççĕ. Усси пулнах: иртнĕ çул вĕсем «Сăран мечĕк» турнирта çĕнтерÿçĕ ятне тивĕçнĕ. Футбол уйĕ тавра хывнă чупмалли çулсене çăмăл атлетсем такăрлаççĕ. Темиçе çул каялла республика чемпионатне Кÿкеçре ирттерни те çакнах çирĕплетет. Стадионта çавăн пекех волейболла вылямалли лапам, тăршшĕне сикмелли тата йĕтре тĕртмелли секторсем пур, куракан валли те вырăн çителĕклех.

Хĕлле стадионта йĕлтĕр сезонĕ уçăлать, çак тĕллевпе унта ятарлă трасса хыватпăр. Халăха йĕлтĕрсене вăхătлăх усă курма та паратпăр. Конькипе ярăнма юратакансем вара пăр çине васкаççĕ, стадионта ăна çулсерен хатĕрлетпĕр. Чи пултаруллă ачасен хушшинче ăмăртусем йĕркелетпĕр. Акă çак кунсенче конькипе чупакансем /1-8-мĕш классем/ черетлĕ турнирта тупăшрĕç. Родион Козловпа Анастасия Федорова, Никита Данилкинпа Мария Никонорова, Дмитрий Ивановпа Софья Ямашева маттур пулчĕç.

Стадионта хоккей курупки вырнаçтарни спортсменсене уйрăмах хавхалантарнă: хĕллехи кунсенче вĕсем кашни кун каток çине тухаççĕ. Паян вĕсене Алексей Максимов çамрăк тренер çул кăтартса пырать. Темиçе çул «Улăпсем» республикăри «Ылтăн шайба» ăмăртăвне хутшăнаççĕ, пĕлтĕрхи турнирта 6-мĕш вырăн йышăнчĕç: пирĕн хоккеистсемшĕн – пысăк çитĕнÿ.

### *Вун-вун ăмăрту*

Спортпа сывлăх комплексĕнче çулталăкра нумай мероприяти иртет. Тĕслĕхрен: иртнĕ çулта пирĕн районта тĕрлĕ шайри 167 ăмăрту-турнир йĕркеленĕ. Вĕсенчен чи пĕлтерĕшлисем – 2004 тата 2012 çулсенче Пĕтĕм Раççейри çуллахи ял спорт вăййисем. Вĕсем халĕ те Кÿкеçсен асĕнчех. Ун чухне стадионта волейболистсем, полиатлонçăсем, çавапа çулакансем, чупакансем тата турник çинче туртăнакансем вăй виçрĕç.

2013 çулхи раштав уйăхĕнче «Улăп» спортпа сывлăх комплексĕнче «Хыпар» хаçатăн парнисене çĕнсе илессишĕн черетлĕ турнир иртрĕ. Ăмăртăва çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен 300 яхăн спортсмен хутшăнчĕ. Турнирăн чи сумлă наградисене чăн-чăн пăхаттирсем тивĕçрĕç.

Районта спорт фестивалĕ ирттересси йăлана кĕчĕ. Çав кун Шупашкар тăрăхĕнче пурăнакансенчен чылайăшĕ Кÿкеçе васкать. Паттăррисемпе хăюллисем спорт арени çине тухаççĕ: ăмăртусене 500 ытла çын хутшăнать. Вĕсем кире пуканĕ йăтас, вĕрен туртас, теннисла выляс енĕпе тупăшаççĕ, армспорт, шашка-шахмат, футбол, çăмăл атлетика тата ытти турнирта кĕрешеççĕ.

Çак кунсенче физкультурăпа спорт керменĕнче Афган вăрçинче пуç хунă Александр Сорокина асăнса йĕлтĕрçĕсен турнирĕ иртрĕ, ветерансен командисем футболла вылярĕç. Сывлăх кунĕ – пысăк пĕлтерешлĕ мероприяти: çак кун спорт керменĕнче 1880 çын сывлăхне çирĕплетрĕ. Акă паян пирĕн стадионта республикăри патшалăх тата вырăнти хăйтытăмлăх органĕсенче вăй хуракансен XIII спартакиади иртет. Вĕсем йĕлтĕрпе чупас енĕпе эстафетăра чи вăйлисене палăртаççĕ.

### *Чи малта – ухăçăсемпе кĕрешÿçĕсем*

Ухăран пересси тата ирĕклĕ мелпе кĕрешесси Шупашкар районĕнче спортăн тĕп тĕсĕсем шутланаççĕ. Пирĕн шкул спортсменĕсен ку енĕпе кăтартăвĕсем те пысăк: вĕсем республика тата федерацин Атăлçи округĕн ăмăртăвĕсенче палăраççĕ. Кÿкеç вăтам шкулĕнче тата лицейра ухăçăсене ăсталăха туптама чылай çул каялла тир хута янă. Пĕлтĕр вĕренÿ учрежденийĕсенче республика чемпионачĕ иртрĕ, унта спорт шкулĕнче вĕренекен О.Козлова, С.Камаев, А.Елизаров, Н.Федорова, А.Семенов, Н.Ефремов медальсем çĕнсе илчĕç, К.Исаев çĕр-шыв ăмăртăвĕнче виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Н.Архипов, И.Алексеева, Е.Гаврилова, А.Васильева кĕрешекенсем Раççей тата Атăлçи округĕн чемпионачĕсенче пьедестал çине хăпарнă. Çавăн пекех пире Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕренекен Александр Новиков атлет савăнтарчĕ. Вăл çĕр-шыври тĕрлĕ ăмăртуран 5 медальпе таврăнчĕ. Армспорт ăсти Юлия Пыркина Европа тата Раççей чемпионачĕсенче пухмача «кĕмĕлле» пуянлатрĕ.

Юлашки çулсенче ишевçĕсем /тренерĕсем – Валерий Ивановпа Эрнест Филиппов/ те палăраççĕ. Малашне вĕсем пысăк кăтартусемпе савăнтарасса шанатпăр. Йĕлтĕрçĕсен спорчĕ те вăй илме тытăнчĕ, вĕсенчен те лайăх кăтартусем кĕтетпĕр. Çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче спорт шкулĕнче тимĕр вăййине юратакансем валли секци уçăлĕ. Çак тĕллевпе кире пуканĕсем туяннă, тренер та ĕçе хатĕр.

«Улăп» спортпа сывлăх комплексĕн коллективĕ те спортпа туслă. Комплекс директорĕ Сергей Тунгулов кире пуканĕ йăтас енĕпе палăрнă. Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче пĕлÿ илнĕ чухне пултаруллă каччă СССР спорт мастерĕн кандидачĕн нормативне тултарнă. 1983 çулта «Хыпар» хаçат турнирĕнче – иккĕмĕш, тепĕр çул çăмăл виçеллĕ яшсен ушкăнĕнче чемпион ятне тивĕçнĕ. 2007 çултанпа спорт шкулне ертсе пырать. Эпĕ – волейболист. Чăваш патшалăх педагогика институчĕн дипломне алла илнĕ хыççăн районти Кăшавăш шкулĕнче физкультура учителĕнче, Шупашкарти 1-мĕш спорт шкулĕнчи ачасене бадминтон ăсталăхне вĕрентрĕм. 2006 çултанпа Кÿкеçри спорт шкулĕнче вăй хуратăп.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**
**çырса илнĕ**

*Конкурс*

# «Пĕлетĕр-и, мĕнле ÇЫН пулнă вăл...»

***А.Г.Николаев космонавт летчикăн тăван ялĕнчи мемориал комплексĕпе «Хыпар» Издательство çурчĕ чылайранпа тытакан çыхăну çирĕпленсех пырать.***

Вулакансем валли пĕрле космос темипе темиçе конкурс та ирттернĕ. Халĕ – тепĕр конкурс. Ăна тĕнче уçлăхне пĕрремĕш хут вĕçнĕ Юрий Алексеевич Гагарин çуралнăранпа кăçалхи пуш уйăхĕн 9-мĕшĕнче 80 çул çитнине халалланă. Тупăшăва 14 çул тултарнисенчен пуçласа кашниех хутшăнма пултарать.

«Пĕлетĕр-и, мĕнле ÇЫН пулнă вăл...» конкурса сумлă юбилее халалласа çырнă сăвăсене, юрăсене, рефератсене, электрон презентацисене, кивĕ сăн ÿкерчĕксене «Хыпар» хаçат редакцийĕнче кăçалхи çу уйăхĕн пĕрремĕшĕччен çак йĕркесен авторĕ йышăнать. Конкурса çĕртме уйăхĕн малтанхи кунĕсенче пĕтĕмлетеççĕ, çĕнтерÿçĕсене Шуршăлти космонавтика музейĕнче чыслаççĕ.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

*Пулни-иртни*

# Шавка йытă вăрттăн çыртать

***«Хыпар» хаçатăн общество корреспондентне Николай Иванова Шупашкарти Пичет çуртĕнче ĕçлекенсем лайăх пĕлеççĕ.***

Унăн питлевĕ «Коммунизм ялавĕнче», халĕ «Хыпарта» сахал мар пичетленнĕ. Хаçат валли материал çырас ăсталăха вăл ЧР Журналистсен союзĕ çумĕнчи общество корреспондентчĕсен университечĕнче туптанă. Пĕр-пĕр ĕç-хĕлри çитменлĕхе асăрхать те – çыру сĕтелĕ хушшине ларать.

Николай Максимович, йывăр ĕçре нумай çул пилĕк авнăскер, тивĕçлĕ канăва кайнăшăн савăнмарĕ. Мĕншĕн тесен 60 тултарсанах ăна ĕç ветеранĕн шутне кĕртмерĕç. «Сана федераци е регион шайĕнче ĕç ветеранĕ илмелли награда паман, çавăнпа патшалăх кÿрекен çăмăллăхпа усă кураймăр», – хурав панă 45 çул ытла производствăра ĕçленĕскере.

Хаçат тусĕ питĕ кÿреннĕ. «Эпĕ заводра çынпа тан вăй хутăм. Вĕсене ветеран удостоверенийĕ пачĕç, мана – çук. Çав документа алла илнисене эмел туянма е автотранспортпа усă курма уйăсерен пин тенкĕ ытла уйăраççĕ. Манăн хула автотранспорчĕнче тÿлесе çÿреме тивет», – пăшăрханса пĕлтерчĕ вăл темиçе çул каялла.

Хăйĕн юбилейне кĕрлеттернĕ хыççăн ветеран йышне кĕрессишĕн çыру сахал мар çырчĕ. Анчах усси пулмарĕ. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев 2011 çул вĕçĕнче Указ кăларса 40 тата 45 çул стаж пухнă хĕрарăмсемпе арçынсене республика шайĕнчи ветеран ятне парсан тин патшалăх кÿрекен çăмăллăхпа усă курма тытăнчĕ. Хисепе тивĕçнĕскер списока лекнĕшĕн питĕ савăнчĕ.

Унтанпа пĕр хушă редакципе çыхăну тытмасăр пурăнчĕ. Пĕррехинче ĕç пÿлĕмне кĕрсе тăчĕ те: «Стрелоксен 324-мĕш дивизийĕн урамĕнчи суту-илÿ лавкки умĕнче йытă уraран çыртрĕ, – терĕ, шăлавар пĕççине тавăрса суран вырăнне пÿрнипе тĕллесе кăтартрĕ. – Пульницана кайма шухăшламарăм. «Уртаракан чире кайса вăхăтсăр вилсе выртатăн», – тесе укол тутарма арăм пульницана хăваласах ячĕ. Сипленме вунă кун çÿрерĕм».



***• Н.Иванов йытă çыртнă вырăна кăтартать.***

Шавка йытă хуçи инкек çинчен телефонпа полицие пĕлтерессе пĕр самант та кĕтмен, часрах куçран çухалнă.

Арăмĕ хистенĕрен упăшки йытă хуçине явап тыттарма ыйтнă çырăвне Калинин районĕн прокурорĕ патне çитернĕ. Ăна Н.Иванов пурăнакан районти полицин 3-мĕш пайне ярса панă. Ветеранпа тĕл пулма сотрудник килнĕ, йытă ăçтан, мĕнле çыртнине тĕплĕн ыйтса пĕлнĕ, чĕр чун хуçине шыраса тупма шантарнă. Анчах сăмаха тытман. Йĕркене пăснăранпа çур çул иртнĕ пулин те ăна административлă кодекспа килĕшÿллĕн явап тыттарман.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ÿкерчĕкĕ

# Шыраса илнĕ

***ЧР прокуратури Çут çанталăк ресурсĕсен министерстви патшалăх валли пулăшу ĕçĕсем пурнăçламалли саккассене вырнаçтарас тĕлĕшпе саккуна пăхăннине тĕрĕсленĕ май министерство экологи технологийĕсен тата управлени тытăмĕсен «ЭСКОС» институтне явап тыттарас тĕлĕшпе мерăсем йышăнманнине тăрă шыв çине кăларнă.***

Министерство 2010 çулта çак институтпа шыв объекчĕсене сăнаса тăмалли системăсем туянса вĕсене ĕçе кĕртме 8,5 млн тенкĕлĕх контракт тунă. Авансне вăхăтра куçарса панă пулин те институт контрактра пăхнă ĕçсене пурнăçламан. Министерство вара аванса, саплаштару тÿлевне шыраса илес енĕпе мерăсем йышăнман.

Прокуратура министр ячĕпе представлени çырнă хыççăн тин лав вырăнтан тапраннă, Мускав хулин Арбитраж судне тавăç тăратнă. Çапла вара патшалăх контрактне пăрахăçланă, институтран 8,9 млн тенке яхăн шыраса илме йышăннă.

**К.НИКОЛАЕВ.**

# Халăх юрри-кĕввин уявĕ

***Çак кунсенче Шупашкарти Ф.Лукин ячĕллĕ музыка шкулĕ халăх юрри-кĕввин, наци поэзийĕн тата ӳнер ăсталăхĕн «Тăван ен» фестивальне йыхравланă.***

2009 çултанпа йĕркелекен уява ку хутĕнче чăвашсен паллă композиторĕ Герман Лебедев çуралнăранпа 100 çул çитнине халалланă. Унта Шупашкар, Канаш, Çĕрпӳ хулисенчи, Вăрмарпа Çĕнĕ Лапсар поселокĕсенчи çамрăк артистсемпе вĕсен вĕрентекенĕсем хутшăннă. Вĕсем концертра чăваш халăх юррисене, композиторсен хайлавĕсене шăрантарнă, уявра илемлĕ те чуна тыткăнлакан сăвăсем янăранă, хăнасем ӳкерчĕксемпе тата ал ĕçĕсемпе паллашнă. Хулари 9-мĕш садик ачисем сцена çине тухни пуриншĕн те кĕтменлĕх пулнă: пĕчĕксене куракансене савăнăçлă ташă-юрăпа тыткăнланă. Фестивальте çавăн пекех чăваш музыка литературин республикăри олимпиадин тата çамрăк мусăкçăсен, ӳнерçĕсен тата тавра пĕлӳçĕсен конкурсĕнче çĕнтернисене чысланă.

**Е.АНДРЕЕВ.**

# Каллех «МММ»...

***Патăрьел районĕн хĕрарăмĕ хăй вăхăтĕнче «МММ» компанипе çыхланса шăнман пăр çине ларса юлнă. Çавна май халĕ такам ун патне шăнкăравласа хăйĕн пирки «МММ» представителĕ тесен, çав укçана тавăрма пулăшу сĕнсен унăн шанăç çуралнă...***

Палламан çын 41 çулти хĕрарăма вăл маларах хывнă укçана тавăрма кăна мар, 1,5 млн тенкĕ саплаштару укçи тӳлеме те шантарнă. Анчах укçа куçарассипе çыхăннă пулăшу ĕçĕсем тӳлевлĕ иккен – 262 пин тенкĕ. Хĕрарăм банк уйрăмĕнчен икĕ кун укçа куçарнă. Анчах саплаштару тӳлевне кĕтсе илеймен. Çакăн хыççăн тин вырăнти шалти ĕçсен пайне кайнă.

Полици ултав тĕслĕхĕпе тĕрĕслев ирттерет. Çийĕнчен ШĔМ пурне те асăрхаттарать: пĕлнĕпĕлмен çынсене, иккĕленӳллĕ информацие ан шанăр, шанчăкçăр тĕслĕхсем пирки полицие çийĕнчех пĕлтерĕр.

**К.АНТОНОВ.**

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**93.Земельный участок** со свидетельством под ИЖС площадью не менее 40 соток, можно с ветхими постройками в Чебоксарском, Моргаушском районах. Посреднику за информацию, если сделка состоится, 2000 руб. Т. 8-927-668-03-46.

**104.Бычков, коров, тёлок, овец,** свиноматок. Т. 8-927-999-37-37.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

## РАЗНОЕ

**139.**Утерянную чековую книжку, выданную ЗАО АКБ "Экспресс-Волга" на имя Албакова Николая Александровича – ООО "Дельта", считать недействительной.

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнасçĕ.

## ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.excomfort.ru. Т.: 46-55-44, 89538998224.

**ООО "СТЭКС-АГРО"**
принимает заказы на поставку
**МИНЕРАЛЬНЫХ УДОБРЕНИЙ.**
Чебоксары, пр. Мира, 3 б.
**Т.: 28-77-28, 89050274851.**

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Доставка. Замер. Без выходных. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х-20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 444433.

**15.Кирпич,** брусчатку, **кольца,** ОПГС, песок, КБ. **Т. 89613393363.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 89033225766.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА** пластиковые, железные **ДВЕРИ**. Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.Керамблоки** 20х20х40, 12х20х40, 10х20х40, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, к/кольца. Доставка. Т. 89033468556.

**30.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, двери** стальные, межкомнатные. Низкие цены. Гарантия качества. Звоните. Тел. 8-937-954-92-45.

**33.Гравмассу,** песок, **керамзит, щебень, торф.** Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**38.Брусчатку, плиты тротуарные.** Огромный ассортимент. Укладка. Т. 89674702736.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 89370100141.

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозём, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы** кованые. Т. 89276689587.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** любой, **срубы** в наличии и на заказ, **дрова,** горбыль. Т. 8-903-389-14-00.

**74.КамАЗ – сельхозвариант.** Т. 8-937-952-84-67.

## ЦВЕТЫ ОПТОМ



**Магазины "Ботаник" предлагают:**
*- цветы срезанные*
(роза, гвоздика, тюльпаны, хризантема, лилии и др.)
*- растения горшечные*
(более 200 видов, цветущие, зелёные, много орхидей)
*- упаковку цветочную, флористические аксессуары.*
Оптовая закупка от 10000 руб.
**Наши адреса:**
г. Чебоксары, пр. Ленина, д. 33. Тел. 55-25-25
г. Чебоксары, пр. 9-й пятилетки, д. 18 корп. 2.
Оптовые прайс-листы можно запросить
по e-mail: setner@bk.ru



Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для ведения сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:080601:59 площадью 99139 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Бикшикское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел.: 8(83532)6-14-26.

**Раççей Федерацийĕн "Раççей Федерацийĕнчи судьясен статусĕ çинчен" саккунĕн 5 статйипе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Судьясен квалификаци коллегийĕ Чăваш Республикинчи Шупашкар хулин Калинин районĕнчи 9-мĕш суд участокĕн миравай судйин вакантлă должноçĕ уçăлни çинчен пĕлтерет.**

**Раççей Федерацийĕн "Раççей Федерацийĕнчи судьясен статусĕ çинчен" саккунĕн 5 статйин 6 пунктĕнче кăтартнă тивĕçлĕ документсемпе заявленисене 2014 çулхи пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен ĕç кунĕсенче – 8-тан пуçласа 12 сехетчен тата 13-рен пуçласа 17 сехетчен, 2014 çулхи пуш уйăхĕн 31-мĕшĕнче 18 сехетчен çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 12 çурт, 302 пӳлĕм.**

**Ыйтса çырнисене хăçан тата ăçта пăхса тухассине претендентсене çирĕплетнĕ йĕркепе пĕлтерĕç.**

## ПРОДАЮ

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 8-937-952-84-67, Владимир.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**79.Прицеп мотоблока,** мини-трактора. Т. 89053444735.

**89.Срубы** /3х3, 6х3/ – готовые и на заказ. Строим под ключ. Т. 8-909-300-31-21.

**103.Кирпич, керамблок, кольца колодезные.** Высокое качество. Низкие цены. Т. 89623213680.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна**, железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**121.Песок, гравмассу,** бой кирпича, **щебень.** Т. 89196567752.



**126.Теплицы** из поликарбоната: 3х4, 3х6, 3х8, 3х10 – в наличии. Доставка по ЧР. **Пенсионерам скидки.** Т. 8/8352/ 36-06-16.

**128. Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 5 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.

**851.Кирпич, кольца.** Д-ка /вездеход манипулятор/. Т. 444407.

## УСЛУГИ

**25.Установка забора** из профлиста, сетки-рабицы, секции ворот /распашные, откатные, автоматика/. Гарантия. Тел. 8-917-651-80-57.

**32.Наркология. Живите трезво!** Анонимно. Консультация бесплатно. С 8 до 13 ч. А.: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.**

Лиц. ЛО 2101000928 МЗ СР РФ от 13.09.13 г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение** колодцев: скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**99.Автоматические ворота, видеонаблюдение.** Т. 89278636398.

**127. Автокрана** – 30 м, 25 тн, **экскаватора-погрузчика** "Volvo" BL 71 с гидромолотом. Водопровод и канализация. Т. 8-967-470-32-20.

**140.Натяжные потолки.** Т. 21-69-93.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и доставка** ж/б колец. Т. 8-905-343-42-07.

## РАБОТА

**97.Требуются рабочие** на монолит. Вахта. Оплата своевременная. Т. 8-917-677-42-98.

**100.Требуются монолитчики.** Т. 8-927-667-82-72.

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

## СУТАТĂП

**795.**Лайăх кĕрекен **таптарнă çăм.** Т. 89170664146.

# Олимпиадăн чăваш çăлтăрĕсем

***«Çавал» эстрадăпа фольклор ансамблĕ Сочирен таврăнчĕ. Республикăри чи пултаруллă коллективсенчен пĕри Хĕллехи XXII Олимп вăййисен лапамĕсенче чăваш культурипе паллаштарнă. Тăван кĕвĕ-çемĕпе чăваш тренерĕсем те киленме пултарнă.***



Гастроль пирки коллектив ертӳçи, ЧР тава тивĕçлĕ артистки Лилия Прокопьева каласа кăтартрĕ:

– Хумханусллă çав самантра республика чысне хӳтĕлеме пире шанăшăн чунран тав тăватпăр. Чĕрери туйăмсене сăмахпа палăртса çитерме çук. Олимп ялне килнĕ коллективсене асăнса тухма та вăхăт самай кирлĕ. Кам кăна пулмарĕ-ши унта? Мари, Тутарстан, Пушкăртстан, Удмурт, Якут, Чукотка, Вятка, Чĕмпĕр, Кубань... артисчĕсем.

Çанталăк та пире пулăшса пычĕ: кăнтăр хĕвелĕ чунсене ăшăтса тăчĕ. Ансамбль «Анастасия» пысăк теплоход çинче пурăнчĕ. Условисем питĕ лайăхчĕ, апла пулин çав тери ывăнаттăмăр. Кунне икĕвиçĕ концерт кăтартаттăмăр. Сăмах май, пĕр концертра çĕр-шыври паллă «На-На» поп-ушкăнпа юнашар ĕçлеме тиврĕ. Олимпиадăна тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр: çĕнĕ тум çĕлеттертĕмĕр. Вăл чăваш халăх хай еврĕлĕхĕпе палăрса тăрать. Çапла тума наци инструменчĕсем те пулăшрĕç. Пушă вăхăт питĕ сахал пулсан та Олимп паркĕнче уçăлса çӳреме май тупрăмăр, Хĕрлĕ уçланкăри канат çулĕпе ярăнса килентĕмĕр. Паллах, хамăрăн спортсменсемшĕн те «чирлесе» илтĕмĕр. Чи пĕлтерĕшли – Сочи Олимпиадин картти çинче Чăваш Енĕн «çулăмне» хăварни.

■ **Мария МИТИНА**

*Çĕнĕ кĕнеке*

# Иванов хыççăнах – «Нарспи»




***Чăваш кĕнеке издательствинче нумай пулмасть çеç-ха «Чăваш Енĕн чаплă çыннисем» ярăмпа «Константин Иванов: Жизнь. Судьба. Бессмертие» /авторĕ Ю.М.Артемьев/ кĕнеке пичетленсе тухнăччĕ. Çак кунсенче вара вулавçăсем патне çĕнĕ кăларăм – «Нарспи» поэма – çитрĕ. Унта произведенин вырăсла куçарăвĕ те пур/ Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай пурнăçланă/.***

Чăваш литература классикĕн К.В.Ивановăн хайлавне вун-вун чĕлхене куçарнă, чăвашла тата вырăсла темиçе хут та пичетлесе кăларнă. Вырăсла А.Петтоки, В.Паймен, П.Хусанкай, Б.Иринин, А.Жаров, А.Смолин куçарăвĕсем кун çути курнă.

«Нарспи» поэма паян та хăйĕн пĕлтерĕшне çухатман. Çĕнĕ кĕнекене П.Сизовпа В.Гончаров ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ. Тиражĕ – 2000 экземпляр.

■ **Надежда СМИРНОВА**

*Мĕншĕн çапла калатпăр*

# Вырăнĕнче çĕрмелле пултăр

Тăван-пĕлĕш пухăннă та кил хуçине нимелле кивĕ çурт вырăнне çĕннине лартма пулăшаççĕ. Пурте пĕлетпĕр: çак ĕçе чи малтан никĕс пуканĕсем лартнинчен тытăнаççĕ. Ĕç вĕçленес умĕн хуçинчен турăш хăш кĕтесре пулмалли пирки ыйтаççĕ. Вара çав вырăнти пукан айне /турă сыхлатăр тесе/ тăпрапа хуплама пуçличчен кĕмĕл укçа хурса хăварма сĕнеççĕ. Пукан лартаççĕ те: «Вырăнĕнче çĕрмелле пултăр, турă сыхлатăр», – тесе сике-сике таптаççĕ, чукмарпа лайăх тĕвеççĕ.

Акă тепĕр кил хуçи пахча картин çĕрсе кайнă юписене çĕннисемпе улăштарма шухăшланă. Ун чухне те «вырăнĕнче çĕрмелле пултăр» теççĕ. Çакна эпир пӳрт пуканĕ, хапха юпи е ахаль юпа çĕртĕр тесе мар, тĕрлĕ сăлтава пула пушарпа вут-кăвар, ытти инкек-синкек сиксе ан тухтăр тесе калатпăр.

■ **Роман ЧЕПУНОВ**

# Гороскоп

*Пуш, 3-9*

**Сурăх.** Бизнеса аталантармашкăн, ăсталăха туптамашкăн ăнăçлă тапхăр. Ахăртнех, сире хавхалантарма савнă çыннăр та май тупĕ: тĕл пулăва йыхравлĕ – турткалашса ан тăрăр. Çăлтăрсем вăл нумайлăха асра юлассине систереççĕ. Анчах каччăсен хĕрсем валли парне хатĕрлеме манмалла мар, умра – уяв.

**Вăкăр.** Ĕçре нимĕнле улшăну та пулмĕ, çавăнпа тивĕçĕре лăпкăн пурнăçлăр, пĕрле вăй хуракансемпе, пуçлăхăрпа харкашма сăлтав ан шырăр. Шухăшланине тем пек калас килсен те çăвара шыв сыпăр. Çăлтăрсем канмалли кунсенче каччăсене савнийĕсене, арçынсене мăшăрĕсене çут çанталăк илемĕпе киленмешкĕн йыхравлама сĕнеççĕ.

**Йĕкĕреш.** Çанă тавăрсах ĕçлетĕр. Вăй-хал тапса тăнăран мĕн палăртнине йăлтах пурнăçа кĕртетĕр. Çăлтăрсем усламçăсене телей кайăкĕ алăран вĕçерĕнесрен сыхланма сĕнеççĕ. Мăшăрланманнисен тимлĕхе çухатмалла мар: çак кунсенче паллашнă каччă /хĕр/ сире шăнман пăр çине лартса хăварма хăтланĕ.

**Рак.** Эрнен малтанхи кунĕсенчех темиçе хыпар пĕлтерĕç. Анчах, шел те, пурте савăнăçлă мар. Ирĕклĕхе туртăнни çемьери лару-тăрăва кăткăслатĕ – хăвăр сасă хăпартнине туятăр тăк лăпланăр, унсăрăн хытах харкашма пултаратăр. Шанса панă ĕçсене пурнăçлама тăрăшăр, анчах хăшне-пĕрне вĕçлеймесен те ан пăшăрханăр – çитес эрнере пушă вăхăт самай пулĕ.

**Арăслан.** Палăртнине пурнăçа кĕртессишĕн хыпкалансах пăтăрмаха çакланатăр. "Васкакан вакка сикнĕ", – тенине асра тытăр, унсăрăн пуçлăхăр, ĕçтешĕрсен умĕнче ятăра яратăр. Кăмăллах мар хыпар илтетĕр, çавна пулах плана улăштарма тивĕ. Хĕрсем валли сĕнӳ: каччă кафене йыхралать-и? Турткалашса ан тăрăр – вăл уявпа парне тăвасшăн.

**Хĕр.** Çăмăл мар тапхăр. Урамра хĕрпе /каччăпа/ паллашрăр-и? Çăлтăрсем ăна шанма сĕнмеççĕ. Чун ыйтни хыççăн кайни те ку эрнере – вырăнсăр. Тăванăрсемпе, пĕрле ĕçлекенсемпе сасă хăпартса ан калаçăр – харкашни лару-тăрăва кăткăслатĕ çеç. Канмалли кунсенче хăнана каймалла-и? Парнене маларах хатĕрлĕр.

**Тараса.** Вăй-хал тапса тăнăран çĕнĕ проектсене алла илетĕр, килĕшӳсем хатĕрлетĕр. Пĕлĕшĕр пулăшнипе тĕрĕс йышăну тăватăр, çавăнпах пăтăрмахран пăрăнса иртетĕр. Юратнă çыннăра хавхалантарма май тупăр: çуркуннен пĕрремĕш эрнин ырă çанталăкĕпе киленĕр.

**Скорпион.** Ку яхăнта çемье çавăрма палăртнă-и? Питĕ лайăх. Çăлтăрсем малашлăхăр телейлĕ пуласса шантараççĕ. Унсăр пуçне çак кунсенче килĕшӳ алă пусма, пĕр-пĕр ĕçе кӳлĕнмешкĕн калаçса татăлма тăрăшăр. Тахçанхи ĕмĕтĕр те пурнăçа кĕрсе кăмăла çĕклĕ.

**Ухăçă.** Шухăшланине чăна çавăрмашкăн меллĕ тапхăр, çавăнпа çăлтăрсем пуç усса ларма сĕнмеççĕ. Çапах вĕсен асăрхаттару та пур: пуçлăхăрпа калаçнă чухне хăвăра алăра çирĕп тытăр, унсăрăн вăл сире каярахпа тавăрма сăлтав тупĕ. Тĕрĕс марлăх чунăра кăшласан та ун пирки çынна ан калăр.

**Ту качаки.** Ĕçре çитĕнӳсем тумалли тапхăр, çавăнпа ăсталăхăра туллин кăтартма ан вăтанăр. Унсăр пуçне питĕ кăмăллă çынпа паллашатăр, вăлах сире имиджа улăштарма пулăшĕ. Ку кăна та мар, каçа юлса ĕçлени, инçе çул çӳреве тухни кăмăлăра çĕклĕ, кĕсйĕре хулăнлатма пулăшĕ.

**Шыв тăкан.** Явапллă тапхăр. Шăпах çавăнпа нимĕнле сăнава та ан хутшăнăр, мĕн пур ĕçе хăнăхнă йĕркепе тăвăр. Пуçлăх сĕннĕ çĕнĕ ĕçпе те тĕплĕ паллашăр, хăвăра шанмастăр тăк ăна алла ан илĕр. Кун пирки ертӳçĕре тӳррĕн калăр. Иккĕленӳ туйăмĕпех ĕçе пуçăнсан кайран ӳкĕнмелле пулĕ.

**Пулăсем.** Канăç паман çивĕч ыйтусене татса памалли эрне. Унсăр пуçне вăй-халăра ан шеллĕр – ытларах тăрмашни çемье бюджетне лайăхлатма май парĕ. Кирек мĕнле ĕçре те ăсталăхăра туллин кăтартăр – çитес вăхăтрах сире çакăншăн пуçлăх мухтĕ. Çемье пуçĕсен мăшăрĕсене уявпа саламламалли çинчен манма юраманнине аса илтереççĕ çăлтăрсем.

# Çанталăк



| | кăнтăрла | | çĕрле |
|---|---|---|---|
| 01.03 | – 4 | – | 9 |
| 02.03 | – 3 | – | 6 |
| 03.03 | – 5 | – | 9 |
| 04.03 | – 5 | – | 6 |
| 05.03 | – 2 | – | 5 |
| 06.03 | – 3 | – | 10 |
| 07.03 | – 1 | – | 7 |

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /явапллă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор И.В.ИВАНОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, явапллă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ,13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсенче пичетленеççĕ.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем явапллă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 8220. Заказ 730.
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.